*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

# КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

КПСС Чăваш обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн
тата Министрсен Совечĕн органĕ

Орган Чувашского обкома КПСС, Верховного Совета
и Совета Министров Чувашской АССР

№ 9 (20142) • Кĕçнерникун, 1990 çулхи январĕн 11-мĕшĕ • Хаçат 1918 çулхи февральтенпе тухать • Хакĕ 3 пус

## ÇИРĔП НИКĔС

Çĕрпÿри автомашинăсем юсакан завод коллективĕ çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсенчен тытăнсах пĕр тикĕс ĕçлет. Тухăçлă ĕçлеме пĕлтĕр тунă ÿсĕмсем те хавхалантараççĕ. Завод коллективĕ иртнĕ çул 260 пин тенкĕ яхăн таса тупăш илнĕ. Ÿсĕмре А. Пантелеев, А. Басов ертсе пыракан бригадăсен тÿпи пысăк. Вĕсем социализмла ăмăртура пĕрре çеç мар çĕнтернĕ.

Ĕç ветеранĕсемпе çамрăксем алла-аллăн тăрăшаççĕ. Н. Лебедев тимĕрçĕ, С. Павлов токарь, А. Михайлов, Г. Иванов, Г. Алексеев слесарьсем ĕçре ырă тĕслĕх кăтартаççĕ.

Çĕрпÿсем кăçал та пысăк тĕллевсем палăртнă. Кунта ĕç тухăçлăхĕ пиллĕк процента яхăн, продукци калăпăшĕ улттă процента яхăн ÿсмелле. Çакна участоксенче ĕçе механизацилениипе, тухăçлăха ÿстернипе тăваççĕ. Таса тупăш илесси те кăçалхинчен кая мар пулмалла. Ĕçлесе илнĕ укçан пысăк пайне вара ĕççыннисен социаллă ыйтăвне тивĕçтерме уйăраççĕ. Хваттерсем тăвасси ÿсмелле.

**О. АЛЕКСЕЕВ.**

## ĂМĂРТУРА МАЛТА ПЫРАКАНСЕМ

⊙ Нина Ивановна Пронина — Çĕмĕрлери автофургонсен комбинатĕнчи ĕç ветеранĕ, 32 çул пиллĕкмĕш сборка цехĕнче отделочница пулса тăрăшать. Пиллĕк уйăх каялла вара ăна бригадира суйларĕç. Пронина бригади çĕнĕ çулта пысăк пахалăхлă ĕçлеме пуçларĕ.

Ю. Дмитриев фотоÿкерчĕкĕ.

*Мордва АССРĕ 60 çул тултарнă тĕле*

# ÿСĔМ ПАЛĂРĂМĔСЕМ

### А. И. БЕРЕЗИН,

КПСС обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ

Мордва çĕрĕ çинче уяв: 60 çул каярах, 1930 çулхи январĕн 10-мĕшĕнче, Мăкшăпа Сар шывĕсем хушшинче государство автономийĕн хĕрлĕ ялавĕ вĕлкĕшме пуçланă. Октябрь революцийĕн Прометей вучĕпе çуталнă ялав мордва халăхĕн çăмăл мар шăпинче тарăн улшăну пулса иртнине пĕлтернĕ. Государство статусне илни уншăн пирĕн нумай нациллĕ Тăван çĕршывра пĕр тан халăхсем хушшинчи социализмла наци туса хума май паракан историллĕ самант пулса тăнă. Мордва халăхĕ çак майпа туллин усă курнă, вуншар çул хушшинче çĕршер çул хушши пĕр улшăнусăр пулнă хуçалăхпа культурăна малалла аталантарнă.

Халĕ Мордва АССРĕ лайăх аталаннă индустриллĕ-аграрлă регион пулса тăрать, унăн нумай отрасльлĕ экономика, çавăн пекех вăл Пĕтĕм Союзра ĕçе территори тăрăх пайлас енĕпе тивĕçлĕ вырăн йышăнать.

Республикăра ытти халăхсем тăванла пулăшнипе икçĕр ытла заводпа фабрика туса лартнă тата вĕсене ку чухнехи технологипе пуянлатнă. Çак предприятисем республикăн пĕрпĕтĕм индустри аталанăвне лайăх кăтартса параççĕ, вĕсен шутĕнче электротехника отраслĕ уйрăмах паллă вырăн йышăнать.

Революциччен Астраханьпе Мускава тата Крыма Хусанпа çыхăнтаракан лаша çулĕсем хĕресленнĕ вырăнта ларнă Саранск хули питĕ сахал çынна йышăнма пултаракан тата çав тери сахал тавар сутса пурăннă пĕчĕк хула çеç пулнă. Тепрен илсен, тавар, пулă, ытти пир-вар улăштарма килсе çÿревĕ кунта купцасем. Халĕ вăл çĕршывăн çутă техники туса кăларакан центр пулса тăнă. Россия Федерацийĕнчи çутатакан йĕркеллĕ кашни пиллĕкмĕш электролампа тата кашни виççĕмĕш люминесцентлă лампа Саранскри «Светотехника» пĕрлешĕвĕ конвейерĕ çинчен тухаççĕ. Çĕршыври кашни пиллĕкмĕш пĕр куркаллă экскаватора тата кашни виççĕмĕш ятарлă преобразователе те Саранскрах кăлараççĕ. Республикăн промышленность предприятийĕсен маркине чикĕ леш енчи 60 çĕршывра та лайăх пĕлеççĕ. Монголипе

чугран килсе тăракан тимĕртамарсăр Саранск металĕ пулманнине эпир лайăх пĕлетпĕр. Ульяновскпа Ленинградран — каучук, Çĕнĕ Шупашкартан кислота ярса памасан пирĕн резина-техника изделийĕсем: шлангсем, пиçиххисем тата ытти таварсем пулмаççĕ. Череповецпа Магнитогорскран металпа прокат ярса памасан та мордвасен автосамосвалсем, экскаваторсем, çул-йĕр тăвакан машинăсем пулмаççĕ. Çавăн пекех эпир хамăран продукцисемсĕр ытти регионсенче те чылай япала пулманнине лайăх ăнланатпăр. Чăн-чăн интернационализм шăпах çак «пĕлÿсемпе» ăнлавсенчен» пуçланать те ĕнтĕ, пирĕн Совет çĕршывĕ ун çинче тытăнса тăрать тата малашне те çаплах пулĕ.

Экономикăн аграрлă отраслĕ малалла пысăк утăм турĕ. Совет влаçĕн çулĕсенче производствăна вăйлă аталантарнă. Тĕп производство фончĕсем вуншар хут ÿснĕ, удобренисем, техника, ытти пурлăх хатĕрĕсем парса тăрасси чылай пысăкланнă, ĕçшĕн тÿлесси ÿснĕ. Пурăнмалли çурт-йĕр, шкулсемпе больницăсем, ача сачĕсем, клубсем, библиотекăсем чылай нумайрах тума пуçларăмăр. Ял çыннине социаллă пурнăçра лайăх пурăнма мĕнпур условисем туса памасăр социализмла цивилизаци пирки калаçма та çук.

Агропромышленность комплексĕ хăйĕн интернационалла тивĕçне кирлĕ пек пурнăçлатăр тата хăйне валли кирлĕ чухлĕ апат-çимĕç продукчĕсем туса илтĕр, çавăн пекех çак сферăра вăй хуман ытти çынсене те тăрантарма пултартăр тесе государство сахал мар укçа-тенкĕ уйăрчĕ. Паян республика кашни çын пуçне 92 килограмм аш-какай, 557 — сĕт, 88 килограмм пахча-çимĕç тата улма-çырла туса илет. Ялта пурăнакан кашни çын халĕ туса хунă ырă пурнăçра хăй тÿрремĕнех вăй хунине курма тата ăна хăйĕн ырлăх-пуянлăхĕ вырăнне хурса йышăнма пултарать.

Çака вăл интернационалла пуянлăх çеç мар, наци пуянлăхĕ те. Мĕншĕн тесен рес-

ленĕвĕпе пĕрлех унăн ăс-хакал пуянлăхĕ те ÿссе пынă. Паллă ĕнтĕ, наци культури нимĕн те çук çĕрте аталанаймасть. Вăл халăхăн темиçе ĕмĕрхи пултарулăхĕпе тăча çыхăннă. Ку чухнехи сăн-сапатне пуянлатса, вăл наукăпа тата техникăпа пĕрле этеме цивилизацин çĕнĕ пусăмĕ патне илсе çитерет. Наци культура йăлисене — халăхăн ăс-хакал çалкуçне упраса хăварасси тата аталантарасси чăннипех те çавăпла ĕç пулса тăчĕ. Ку вăл çапла пулнă тата малашне те çавăн пекех пулать: наци пуянлăхне пĕтĕм этемлĕхĕн ăс-хакал пуянлăхĕпе çывăхлатсан вăл интернацилле тивлет пулса тăрать. Çакăн пек тăвас тесе мордва интеллигенцийĕ вăй-хала шеллесе тăман, ăс-хакал ырлăхне ÿстерсе пыракан тĕп вăй пулса тăрать, ку енĕпе 30-мĕш çулсенчи культура революцийĕ лайăх варлăх акса хăварнă. Мордва культурипе наукин чаплă деятелĕсем — С. Эрьзя скульптор, Ф. Сычков художник, И. Яушев юрăç, Л. Кирюков композитор, Т. Михайлова балерина хăйсен творчествипе Мордва çĕрне чапа кăларнă, вĕсем тивĕçлипех тăван наци мухтавĕ шутланаççĕ, кунпа пĕрлех вĕсем çĕршыв тата тĕнче культурине аталантарма нумай пулăшнă, мĕншĕн тесен культурăпа искусствăри паллă çитĕнÿсем пурте наци тата интернацилĕх хутшăнăвĕсенче çуралаççĕ.

Пирĕн çĕршывăн ăс-хакăл çĕнетĕвĕ наци интеллектĕпе уйрăмах çыхăннă. Культура революцийĕ букварьтен пуçланнă пулсан, паян республикăра 133 пин çын вăтам шкулсенче, 22 пин çын — аслă шкулсенче, 16 пин çын техникумсенче тата техника профессийĕ паракан училищĕсенче вĕренеççĕ. Наукăра пахалăх тĕлĕшĕнчен пысăк улшăнусем пулса иртнĕ. Хальхи вăхăтра республикăра наука кандидачĕсем 800 тата наука докторĕсем 60. Вĕсем çамрăксене чăннипех ырă ĕçсем тăвакансем пулма вĕрентсе хатĕрлеççĕ.

Мордва çĕрĕ çине килекен хăнасем час-часах пирĕн республикăна çĕршывра хăйне

лăхĕсем ытти халăхсемпе пĕрле автономиллĕ республикăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕнчи çивĕч ыйтусене пĕр тан вăй хурса татса параççĕ, унăн управлени органĕсенче кунта пурăнакан тĕрлĕ наци çыннисем ĕçлеççĕ. Социализмла мордва нацийĕн малашнехи аталанăвĕн ыйтăвĕсене эпир пĕр-пĕрне кÿрентермесĕр тата тĕрĕслĕхе пăсмасăр татса паратпăр — ку енĕпе республикăра ятарлă программа туса хатĕрленĕ.

Çапах та Мордва республикинче наци ыйтăвĕ çук тесе çăмăллăн калани тĕрĕс пулмĕччĕ. Паллах, çак ыйту пур, анчах вăл социаллă пурнăçпа культура задачисене татса панипе пĕрле пурнăçланса пырать.

Уйрăм ыйту — чĕлхене аталантарасси, унсăрăн наци пулма та пултараймасть. Юлашки çулсенче республикăра истори тĕлĕшĕнчен йĕркеленсе çитнĕ икчĕлхелĕхе аталантарас енĕпе мордва халăхĕн чĕлхи сине тимсĕртерех пăхни сисĕннĕ, халĕ çав ситменлĕхсене утăм хыççăн утăм туса пĕтерсе пыратпăр. Кăçал тăван чĕлхене вĕрентекен 22 шкул хушăннă. Паллах, ĕнтĕ, кунта харпăр хăйĕн ирĕклĕхĕн принципне сирĕп тытса пыратпăр. Хальхи вăхăтра республикăра çавăн пек шкулсем 336, ку вăл вĕсен пĕтĕм хисепĕн 40 процентĕ шутланать. Мордва чĕлхисене вĕренмелли телевиденипе радио урокĕсене тăтăшах ирттерме тытăннă. Хăшпĕр район хаçачĕсене ятарласа наци чĕлхисемпе — ирçе, мăкшă, тутар чĕлхисемпе кăлараççĕ.

Çĕнетÿ мĕнпур халăхсене этемлĕхĕн çутă ĕмĕчĕсем патне çитмешкĕн çунат хушать. КПССăн наци ыйтăвĕпе хатĕрленĕ платформи государство, хуçалăх тата культура строительствин мĕнпур енĕсенче автономиллĕ республикăсен прависене палăрмаллах пысăклатнă. Советла социализмлă государствăсем пулса, вĕсем хăйсен территорийĕнче администрацие территори пайланăвĕн, çутçанталăка сыхлас, наци культурипе чĕлхине аталантарас, палăксене упрас енĕн мĕнпур ыйтăвĕсене хăйсем татса пама тытăнаççĕ. Паллах ĕнтĕ, хăйсен наци-территори пĕрлешĕвĕн тулашĕнче пурăнакан гражданĕсем пирки те [illegible]

# КАНДИДАТСЕНЕ РЕГИСТРАЦИЛЕНĔ

**Январĕн 9-мĕшĕнче 892-мĕш Железнодорожнăй территори суйлав округĕ тăрăх РСФСР халăх депутатне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Унта РСФСР халăх депутатне суйлама çак кандидатсене регистрациленĕ:**

Вениамин Петрович **Волков**, 1958 çулта çуралнă, Чăваш АССРĕнчи Елчĕк районĕнчи «Колос» колхозĕн профсоюз комитечĕн председателĕ, КПСС членĕ, çак районти Аслă Шăхаль ялĕнче пурăнать;

Иван Якимович **Гурин**, 1953 çулта çуралнă, Чăваш

Елена Петровна **Кассирова**, 1956 çулта çуралнă, Чăваш АССРĕнчи Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе хисепленекен колхозри парти комитечĕн секретарĕ, çак районти Аслă Елчĕк ялĕнче пурăнать;

Михаил Владимирович

лешĕвĕн «Чебоксарский» ятти строительство комбиначĕн начальникĕ, КПСС членĕ, Шупашкарта пурăнать.

### ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ КАЛИНИН РАЙОНĔ ТĂРĂХ

**24-мĕш Николаев суйлав округĕ**

Виктор Александрович **Рубцов**, 1947 çулта çуралнă, «Шупашкарти промышленность тракторĕсен заводĕ» производство пĕрлешĕвĕн

заместителĕ, КПСС членĕ, Шупашкарта пурăнать;

Иван Тимофеевич **Петров**, 1941 çулта çуралнă, «Спецстроймеханизаци» трестăн 5-мĕш строительство управленийĕн аслă прорабĕ, партире тăмасть, Шупашкарта пурăнать.

### ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ МУСКАВ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

**42-мĕш Северный суйлав округĕ**

◎ *Нина Ивановна Пронина — Ҫӗмӗрлери автофургонсен комбинатӗнчи ӗҫ ветеранӗ, 32 ҫул пиллӗкмӗш сборка цехӗнче отделочница пулса тӑрӑшать. Пилӗк уйӑх каялла вара ӑна бригадира суйларӗҫ. Пронина бригади ҫӗнӗ ҫулта пысӑк пахалӑхлӑ ӗҫлеме пуҫларӗ.*

*Ю. Дмитриев фотоӳкерчӗкӗ.*

# КАНДИДАТСЕНЕ РЕГИСТРАЦИЛЕНӖ

**Январӗн 9-мӗшӗнче 892-мӗш Железнодорожнӑй территори суйлав округӗ тӑрӑх РСФСР халӑх депутатне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округри суйлав комиссийӗн ларӑвӗ пулса иртнӗ. Унта РСФСР халӑх депутатне суйлама ҫак кандидатсене регистрациленӗ:**

Вениамин Петрович **Волков**, 1958 ҫулта ҫуралнӑ, Чӑваш АССРӗнчи Елчӗк районӗнчи «Колос» колхозри профсоюз комитечӗн председателӗ, КПСС членӗ, ҫак районти Аслӑ Шахаль ялӗнче пурӑнать;

Иван Якимович **Гурин**, 1953 ҫулта ҫуралнӑ, Чӑваш АССРӗнчи Тӑвай районӗнчи «Кубнинский» совхоз директорӗ, КПСС членӗ, ҫак районти Чутей ялӗнче пурӑнать;

Евгений Иванович **Карпеев**, 1944 ҫулта ҫуралнӑ, Чӑваш АССРӗнчи Комсомольски районӗнчи «Россия» колхоз председателӗ, КПСС членӗ, ҫак районти Александровка ялӗнче пурӑнать;

Елена Петровна **Кассирова**, 1956 ҫулта ҫуралнӑ, Чӑваш АССРӗнчи Елчӗк районӗнчи Ленин ячӗпе хисепленекен колхозри парти комитечӗн секретарӗ, ҫак районти Аслӑ Елчӗк ялӗнче пурӑнать;

Михаил Владимирович **Киселев**, 1948 ҫулта ҫуралнӑ, Канашри вагонсем юсакан заводри электросварщик, КПСС членӗ, Канашра пурӑнать;

Валерий Юрьевич **Михайлов**, 1957 ҫулта ҫуралнӑ, Чӑваш АССРӗнчи Комсомольски районӗнчи «Октябрь ялавӗ» хаҫат редакторӗ, КПСС членӗ, Комсомольски ялӗнче пурӑнать.

* * *

**Чӑваш АССР халӑх депутачӗсене суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округри суйлав комиссийӗсем ҫак кандидатсене регистрациленӗ:**

### ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ ЛЕНИН РАЙОНЕ ТАРАХ

#### 3-мӗш Ленин суйлав округӗ

Владимир Аверкиевич **Алексеев**, 1956 ҫулта ҫуралнӑ, Шупашкарти автомобильсем юсакан завод мастерӗ, партире тӑмасть, Шупашкарта пурӑнать;

Дмитрий Гаврилович **Быканов**, 1936 ҫулта ҫуралнӑ, СССР Госбанкӗн Чӑваш республикинчи управленийӗн начальникӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать;

Борис Васильевич **Викторов**, 1933 ҫулта ҫуралнӑ, «Чувашэнерго» производствӑпа энергетика пӗрлешӗвӗн управленийӗн инженерӗ, КПСС членӗ, Ҫӗнӗ Шупашкарта пурӑнать;

Анатолий Викторович **Димитриев**, 1955 ҫулта ҫуралнӑ, Шупашкарти пассажирсем илсе ҫӳрекен автотранспортӑн производство пӗрлешӗвӗн водителӗ, партире тӑмасть, Шупашкарта пурӑнать;

Георгий Иванович **Иванов**, 1948 ҫулта ҫуралнӑ, Чӑваш АССР Шалти ӗҫсен министерствин пушар хурал управленийӗн начальникӗн заместителӗн ӗҫӗсене туса пыраканӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать;

Петр Иванович **Курчин**, 1945 ҫулта ҫуралнӑ, «Медтехника» производствӑпа сутӑ-илӳ пӗрлешӗвӗн электромеханикӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать;

Станислав Романович **Малютин**, 1929 ҫулта ҫуралнӑ, Чӑваш АССР Министрсен Совечӗ ҫумӗнчи чӗлхе, литература, истори тата экономика наука тӗпчев институчӗн директорӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать;

Михаил Петрович **Николаев**, 1948 ҫулта ҫуралнӑ, СССР Шалти ӗҫсен министерствин Шупашкарти милицин ятарла вӑтам шкулӗн начальникӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать.

#### 7-мӗш Заводской суйлав округӗ

Николай Матвеевич **Матвеев**, 1937 ҫулта ҫуралнӑ, И. Я. Яковлев ячӗпе хисепленекен Чӑваш государство педагогика институчӗн доценчӗ, партире тӑмасть, Шупашкарта пурӑнать;

Александр Игоревич **Соколов**, 1951 ҫулта ҫуралнӑ, Чӑваш краеведени музейӗн пай заведующийӗ, партире тӑмасть, Шупашкарта пурӑнать;

Владимир Глебович **Ткаченко**, 1958 ҫулта ҫуралнӑ, Чӑваш АССР Министрсен Совечӗ ҫумӗнчи Архив управленийӗн начальникӗн заместителӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать.

#### 19-мӗш Ҫӗнӗ Лапсар суйлав округӗ

Николай Германович **Иванов**, 1948 ҫулта ҫуралнӑ, «Чувашагропромдорстрой» пӗрлешӗвӗн куҫса ҫӳрекен механизациленӗ ҫул-йӗр колоннин тӗп бухгалтерӗ, партире тӑмасть, Шупашкарта пурӑнать;

Эдуард Алексеевич **Кубарев**, 1939 ҫулта ҫуралнӑ, «Чувашагропромстрой» пӗрлешӗвӗн «Спецстрой» тресчӗн управляющийӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать;

Виктор Александрович **Мазик**, 1939 ҫулта ҫуралнӑ, «Чувашагропромстрой» пӗрлешӗвӗн «Чебоксарский» ялти строительство комбиначӗн начальникӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать.

### ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ КАЛИНИН РАЙОНӖ ТАРАХ

#### 24-мӗш Николаев суйлав округӗ

Виктор Александрович **Рубцов**, 1947 ҫулта ҫуралнӑ, «Шупашкарти промышленность тракторӗсен завочӗ» производство пӗрлешӗвӗнчи ДОСААФ комитечӗн председателӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать;

Юрий Ксенофонтович **Федоров**, 1936 ҫулта ҫуралнӑ, Чӑваш АССР Халӑх контроль комитечӗн председателӗн заместителӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать;

Чонгар Михайлович **Шлепнев**, 1932 ҫулта ҫуралнӑ, Шупашкарти «Энергозапчасть» сӑнавлӑ-экспериментлӑ завод директорӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать.

#### 31-мӗш Кадыков суйлав округӗ

Всеволод Михайлович **Михайлов**, 1951 ҫулта ҫуралнӑ, 5-мӗш стройтрестӑн 11-мӗш строительство управленийӗн бригадирӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать.

#### 32-мӗш Бауман суйлав округӗ

Александр Ильич **Кудрявцев**, 1950 ҫулта ҫуралнӑ, «Шупашкарти промышленность тракторӗсен завочӗ» производство пӗрлешевӗн слесарь-сборщикӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать;

Владимир Алексеевич **Павлов**, 1957 ҫулта ҫуралнӑ, «Текстильмаш» производство пӗрлешӗвӗн слесарӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать.

#### 33-мӗш Комсомольски суйлав округӗ

Николай Иванович **Алексеев**, 1936 ҫулта ҫуралнӑ, Шупашкарти КПСС XXIV съезчӗ ячӗпе хисепленекен агрегат завочӗн инженер-конструкторӗ, партире тӑмасть, Шупашкарта пурӑнать;

Михаил Дмитриевич **Кириллов**, 1945 ҫулта ҫуралнӑ, «Чувашкабель» производство пӗрлешӗвӗн генеральнӑй директорӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать.

#### 40-мӗш Алькеш суйлав округӗ

Владислав Иванович **Васильев**, 1950 ҫулта ҫуралнӑ, «Спецстроймеханизация» трестри парти комитечӗн секретарӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать;

Владислав Петрович **Лукин**, 1956 ҫулта ҫуралнӑ, Отрасльсен пӗрлехи «Куҫ микрохирургийӗ» наука техника комплексӗн Шупашкарти филиалӗн директорӗн заместителӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать;

Иван Тимофеевич **Петров**, 1941 ҫулта ҫуралнӑ, «Спецстроймеханизация» трестӑн 5-мӗш строительство управленийӗн аслӑ прорабӗ, партире тӑмасть, Шупашкарта пурӑнать.

### ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ МУСКАВ РАЙОНЕ ТАРАХ

#### 42-мӗш Севернӑй суйлав округӗ

Сергей Петрович **Березкин**, 1950 ҫулта ҫуралнӑ, Шупашкарти шывпа тата пылчӑкпа сиплекен лечебницӑн главнӑй врачӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать;

Алексей Никонович **Степанов**, 1947 ҫулта ҫуралнӑ, «Васкавлӑ медицина пулӑшӑвӗ» пӗрлешӗвӗн генеральнӑй директорӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать.

#### 49-мӗш Ҫеҫпӗл суйлав округӗ

Владимир Иванович **Глотов**, 1946 ҫулта ҫуралнӑ, «Чувашспецремстрой» трест управляющийӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать;

Петр Дмитриевич **Макаров**, 1954 ҫулта ҫуралнӑ, республикӑри 2-мӗш больницӑн уйрӑм заведующийӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать;

Елена Антоновна **Павлова**, 1941 ҫулта ҫуралнӑ, «Васкавлӑ медицина пулӑшӑвӗ» пӗрлешӗвӗн уйрӑм заведующийӗ, партире тӑмасть, Шупашкарта пурӑнать;

Валерий Андреевич **Петров**, 1957 ҫулта ҫуралнӑ, ВЛКСМ Чӑваш обкомӗн пӗрремӗш секретарӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать;

Гиля Фазыловна **Султанова**, 1928 ҫулта ҫуралнӑ, И. Н. Ульянов ячӗпе хисепленекен Чӑваш государство университечӗн кафедра заведующийӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать.

#### 60-мӗш Чернышевский суйлав округӗ

Леонид Юрьевич **Александров**, 1961 ҫулта ҫуралнӑ, Шупашкар хулинчи коммуналлӑ хуҫалӑхӑн производство пӗрлешӗвӗн ятарлӑ автохуҫалӑхӗн гараж начальникӗ, партире тӑмасть, Шупашкарта пурӑнать;

Игорь Евгеньевич **Иванов**, 1957 ҫулта ҫуралнӑ, Шупашкарти ҫамрӑксен ҫурт-йӗр комплексӗн организациллӗ комитечӗн председателӗн заместителӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать;

Ильдар Нуртдинович **Шакиров**, 1946 ҫулта ҫуралнӑ, В. И. Чапаев ячӗпе хисепленекен производство пӗрлешӗвӗнчи парти комитечӗн секретарӗ, КПСС членӗ, Шупашкарта пурӑнать.

---

парӑҫҫӗ. Вӗсен шутӗнче электротехника отраслӗ уйрӑмах паллӑ вырӑн йышӑнать.

Революциччен Астраханьпе Мускава тата Крыма Хусанпа ҫыхӑнтаракан лаша ҫулӗсем хӗресленнӗ вырӑнта ларнӑ Саранск хули питӗ сахал ҫынна йышӑнма пултаракан тата ҫав тери сахал тавар сутса пурӑннӑ пӗчӗк хула ҫеҫ пулнӑ. Тепрен илсен, тавар, пулӑ, ытти пир- [illegible] нӗ кунта купцасем. Халӗ вӑл ҫӗршывӑн ҫутӑ техники туса кӑларакан центр пулса тӑнӑ. Россия Федерацийӗнчи ҫутатакан йӗркеллӗ кашни пиллӗкмӗш электролампа тата кашни виҫҫӗмӗш люминесцентлӑ лампа Саранскри «Светотехника» пӗрлешӳ конвейерӗ ҫинчен тухаҫҫӗ. Ҫӗршыври кашни пиллӗкмӗш пӗр куркаллӑ экскаватора тата кашни виҫҫӗмӗш ятарлӑ преобразователе те Саранскрах кӑлараҫҫӗ. Республикӑн промышленность предприятийӗсен маркине чикӗ леш енчи 60 ҫӗршывра та лайӑх пӗлеҫҫӗ. Монголипе Болгарире, Кубӑпа Вьетнамра, Сирипе Иранра — ҫӗр чӑмӑрӗн нумай кӗтесӗнче ҫунаҫҫӗ Саранскра туса кӑларнӑ микрохӗвелсем, хӑйсен ҫутипе вӗсем пӗр-пӗринчен пиншер километр аякра пурӑнакан ырӑ кӑмӑллӑ мӗнпур ҫынсене туслаштараҫҫӗ.

Пирӗн «экспорт-импорт» тӑрӑх хаклас пулсан, ҫакӑн пек пӗтӗмлетӳ тума пулать: пӗтӗм ҫӗршыв республика валли ӗҫлет тата республика пӗтӗм ҫӗршыв валли ӗҫлет. Пирӗн продукцие илсе тӑракансемпе хӑйсен изделийӗсене пирӗн республикӑна ӑсатакансен адресӗсене ку чухнехи электронлӑ шутлав машини ҫеҫ шута илме пултарать. Хамӑрӑн продукцие эпир ҫулталӑкра пурӗ 2,5 миллиард тенкӗлӗх 68 республикӑпа облаҫа ӑсататпӑр тата ҫавӑн чухлех ҫӗршывӑн 62 регионӗнчен продукци илсе тӑратпӑр. Мордва промышленность продукцине туса кӑларас ӗҫе кашни совет ҫынни хутшӑнать. Ҫак ӗҫ ССР Союзӗнчи халӑхсен тӑванлӑхӗпе тата туслӑхӗпе ҫуталса тӑрать, пӗр-пӗрин хушшинче пурлӑх тӗлӗшӗнчен суту-илӳ тума тата ӑс-хакӑл пуянлӑхӗсемпе паллаштарма май парать. Черновцыран илсе килекен хӗртсе тасатнӑ ҫӗркӑмрӑксӑр, Кӑнтӑр Уралтан ярса паракан чугунсӑр тата Кремен-

расси чылай пысӑкланнӑ, ӗҫшӗн тӳлесси ӳснӗ. Пурӑнмалли ҫурт-йӗр, шкулсемпе больницӑсем, ача сачӗсем, клубсем, библиотекӑсем чылай нумайрах тума пуҫларӑмӑр. Ял ҫыннине социаллӑ пурнӑҫра лайӑх пурӑнма мӗнпур условисем туса памасӑр социализмла цивилизаци пирки калаҫма та ҫук.

Агропромышленность комплексӗ хӑйӗн интернационалла тивӗҫне кирлӗ пек пур- [illegible] кирлӗ чухлӗ апат-ҫимӗҫ продукчӗсем туса илтӗр, савӑн пекех ҫак сферӑра вӑй хуман ытти ҫынсене те тӑрантарма пултартӑр тесе государство сахал мар укҫа-тенкӗ уйӑрчӗ. Паян республика кашни ҫын пуҫне 92 килограмм аш-какай, 557 — сӗт, 88 килограмм пахча-ҫимӗҫ тата улма-ҫырла туса илет. Ялта пурӑнакан кашни ҫын халӗ туса хунӑ ырӑ пурнӑҫра хӑй тӳрремӗнех вӑй хунине курма тата ӑна хӑйӗн ырлӑх-пуянлӑхӗ вырӑнне хурса йышӑнма пултарать.

Ҫака вӑл интернационалла пуянлах ҫеҫ мар, наци пуянлӑхӗ те. Мӗншӗн тесен республикӑри ял ӗҫченӗсенчен ҫурри ытла тӗп наци ҫыннисем. Ҫавӑнпа та инҫетри ялсене ҫӗнӗрен аталантарасси — вӑл унта пурӑнакан ҫынсен: мордвасен, вырӑссен, тутарсемпе ытти халӑхсен наци йӑли-йӗркине малалла аталантарасси те. Ҫакӑнпа ҫыхӑннӑ такаксен тӗллевӗ — интернационалла таса тивӗҫ — тӗрлӗ наци ҫыннисем кирек хӑш вырӑнта пурӑнаҫҫӗ пулсан та вӗсен пурнӑҫ шайне пӗр пек ӳстерсе пырасси. Хальхи вӑхӑтра ҫакна валли укҫа-тенкӗ шеллени киревсӗр япала, вӑл пирӗн политикӑна хирӗҫлет. Мӗншӗн тесен яллӑ вырӑнта пурӑнакан вуншар пин ҫын, ҫав шутра тӗп наци ҫыннисем те социаллӑ тӗреслӗх туса хурасса кӗтеҫҫӗ. Ана мӗн чухлӗ хӑвартрах тӑваҫҫӗ, пуриншӗн те ҫавӑн чухлӗ лайӑхрах — апат-ҫимӗҫ те ҫителӗклӗ, кӑмӑл та тулли пулӗ. Ҫакӑн пек принциплӑ позици йышӑнаҫҫӗ ҫӗнетӳ вӑхӑтӗнче республикӑри парти, совет, хуҫалӑх органӗсем. Ҫак позицие ялӑн социаллӑ пурнӑҫне тӗпрен ҫӗнетсе улӑштарас тӗлӗшпе ятарласа туса хатӗрленӗ комплекслӑ программӑра усӑмлӑн палӑртса хӑварнӑ тата ӑна пурнӑҫа кӗртме пуҫланӑ.

Мордва нацийӗн социаллӑ пурнӑҫпа экономикӑри ҫӗк-

Кирюков композитор, Т. Михайлова балерина хӑйсен творчествипе Мордва ҫӗрне чапа кӑларнӑ. Вӗсем тивӗҫлипех тӑван наци мухтавӗ шутланаҫҫӗ. Кунпа пӗрлех вӗсем ҫӗршыв тата тӗнче культурине аталантарма нумай пулӑшнӑ, мӗншӗн тесен культурӑпа искусствӑри паллӑ ҫитенӳсем пурте наци тата интернацилӗх хутшӑнӑвӗсенче ҫуралаҫҫӗ.

Пирӗн ҫӗршывӑн ӑс-хакӑл [illegible] уйрӑлми ҫыхӑннӑ. Культура революцийӗ букварьтен пуҫланнӑ пулсан, паян республикӑра 133 пин ҫын вӑтам шкулсенче, 22 пин ҫын — аслӑ шкулсенче, 16 пин ҫын техникумсенче тата техника профессийӗ паракан училищӗсенче вӗренеҫҫӗ. Наукӑра пахалӑх тӗлӗшӗнчен пысӑк улшӑнусем пулса иртнӗ. Хальхи вӑхӑтра республикӑра наука кандидачӗсем 800 тата наука докторӗсем 60. Вӗсем ҫамрӑксене чӑннипех ырӑ ӗҫсем тӑвакансем пулма вӗрентсе хатӗрлеҫҫӗ.

Мордва ҫӗрӗ ҫине килекен хӑнасем час-часах пирӗн республикӑна ҫӗршыва хӑйне евӗр пӗчӗклетсе кӑтартса пани вырӑнне хураҫҫӗ. Чӑнах та, хӑйӗн чиккисемпе вӑл Союз евӗрлех, кунта нумай наци ҫыннисем пурӑнаҫҫӗ. Паян Мӑкшӑ тата Сӑр юханшывӗсем хушшинче 40 ытла пысӑк тата пӗчӗк йышлӑ халӑхсен представителӗсем пурӑнаҫҫӗ. Ҫав шутра вырӑссем 58 процент, мордвасем —34, тутарсем 5 процент. Наци ушкӑнӗсем уйрӑм вырӑнсенче пурӑннӑ май, республикӑра нацисем хушшинчи хутшӑнусем те хӑйне евӗр йӗркеленнӗ. Анчах та интерессем тӗрлӗрен пулни шайлашӑва ҫирӗплетме чӑрмантармасть. Пирӗн нацисемпе халӑхсем утмӑл ҫул ӗнтӗ туслӑ ҫемьере пурӑнаҫҫӗ, вӗсем социаллӑ пурнӑҫри чухӑнлӑхпа хутпӗлменлӗхе пӗрле пӗтерсе пынӑ. Мордва халӑхӗ кирек хӑҫан та — савӑнӑҫра та, хуйхӑ-суйхӑра та — шанчӑклӑ тусӗ — вырӑс халӑхӗ куллен-кун пулӑшнине туйса тӑнӑ. Вырӑс халӑхӗ Октябрьти революци хыҫҫӑнчи йывӑр ӗҫе — пӗчӗк йышлӑ халӑхсене аталану ҫулӗ ҫине тухма пулӑшассине хӑй ҫине илнӗ. Ҫак интернационалла таса тивӗҫе вӑл чыслӑн пурнӑҫланӑ, нацисем хушшинчи хутшӑнусен тӗлӗнмелле паха тӗслӗхӗсене кӑтартнӑ.

Мордва, тутар, вырӑс ха-

Паллах, ӗнтӗ, кунта харпӑр хӑйӗн ирӗклӗхӗн принципне сирӗп тытса пыратпӑр. Хальхи вӑхӑтра республикӑра савӑн пек шкулсем 336, ку вӑл вӗсен пӗтӗм хисепӗн 40 процентне шутланать. Мордва чӗлхисене вӗренмелли телевиденипе радио урокӗсене тӑтӑшах ирттерме тытӑннӑ. Хӗшпӗр район хаҫачӗсене ятарласа наци чӗлхисемпе — ирҫе, мӑкшӑ, тутар чӗлхисемпе кӑлараҫҫӗ.

Совет мӗнпур халӑхсене [illegible] патне ситмешкӗн ҫунат хушать. КПССӑн наци ыйтӑвӗпе хатӗрленӗ платформи государство, хуҫалӑх тата культура строительствин мӗнпур енӗсенче автономиллӗ республикӑсен прависене палӑрмаллах пысӑклатнӑ. Советлӑ социализмлӑ государствӑсем пулса, вӗсем хӑйсен территорийӗнче администраципе территори пайланӑвӗн, сутҫанталӑка сыхлас, наци культурипе чӗлхине аталантарас, палӑксене упрас ӗҫӗн мӗнпур ыйтӑвӗсене хӑйсем татса пама тытӑнаҫҫӗ. Паллах ӗнтӗ, хӑйсен наци-территори пӗрлешӗвӗн тулашӗнче пурӑнакан гражданӗсем пирки те ытларах тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫапла, эпир республика тулашӗнче ҫӗршывӑн тӗрлӗ кӗтесӗсенче — Атӑл тӑрӑхӗнчен Армение сити тата Калининградран Сахалина ҫити пӗр вырӑнта пурӑнакан мордва ҫыннисене пирӗн республикӑн уйрӑлми пайӗ тесе шутлатпӑр. Унта нумай та, сахал та мар мордва нацин 880 пин представителӗ пурӑнать, хӑй вӑхӑтӗнче вӗсем урӑх ҫӗре куҫса кайнӑ. Вӗсене хӑйсен наци сӑн-сӑпатне упраса хӑварма пулӑшасси — пирӗн нравственность тӗлӗшӗнчи тивӗҫ. Ҫак шухӑша пурнӑҫа кӗртмелли вариант — республика тулашӗнче пурӑнакан мордва ҫыннисем валли облаҫсенче культура центрӗсем туса хуни.

Кашни халӑхӑн историйӗ пӗрре кӑна. Ана уйрӑм вырӑнта пытарса тӑма та, ҫӗнӗрен ҫырса хатӗрлеме те май килмест. Мордва халӑхӗн историйӗ пӗтӗм союз историйӗпе уйрӑлми ҫыхӑннӑ. Вӑл пӗрлӗхлӗ интернационаллӑ суртра пурӑнни харпӑр хӑйӗн уйрӑм наци хваттерӗсем тӑрӑх саланса кайниччен нумай лайӑхраххине кӑтартса парать. Эпир пурсӑмӑр та пӗрлӗхлӗ шӑпапа тата тӗллевсемпе ҫыхӑннӑ. Пурсӑмӑр та пӗрле ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑватпӑр.

---

# АШ-КАКАЙ ЫТЛАРАХ ПУЛӖ-И?

Иртнӗ ҫул РСФСРти Хура тӑпраллӑ мар зонӑри автономиллӗ республикӑсемпе облаҫсем аш-какай туса илессине питӗ сахал ӳстернӗ, малтан палӑртнӑ тӗллевсем пурнӑҫланайман. Сысна ашӗ туса илессине ӳстерейменни, сысна ашӗ туса илекен комплекссем пӗтӗм хӑватпа ӗҫлейменни уйрӑмах пӑшӑрхантарать. Сӑлтавӗ те паллӑ: тырпул тухӑҫӗ пӗчӗк пулнӑ май, вӗсем валли фураж сахал уйӑрни.

Сысна ашӗ ытларах туса илме килти хушма хуҫалӑхсем нумай пулӑшма пултараҫҫӗ. Юлашки ҫулсенче, чӑн та, ялта пурӑнакансенчен чылайӑшӗ килте выльӑх ытларах усрама тытӑннӑ. Аш-какайне хӑйсем валли те, сутмалӑх та хатӗрлеҫҫӗ. Ҫапах та ҫакна ҫителӗклӗх теме ҫук. Мӗн кансӗрлет-ха ял ҫыннисене килте выльӑх тытма? Колхозсемпе совхозсем чылай чухне вӗсене ҫура сахал сутаҫҫӗ. Хакӗ те тивӗҫтермест. Выльӑх апачӗ ҫителӗксӗр уйӑрни те чӑрмав кӳрет.

Ҫак кӑткӑс ыйтусене сӳтсе явас тӗллевпе иртрӗ те пирӗн республикӑра Хура тӑпраллӑ мар зонӑри облаҫсемпе автономиллӗ республикӑсен Агропромӗсенчи выльӑх-чӗрлӗх пайӗсен начальникӗсемпе тӗп специалисчӗсен икӗ кунлӑх семинарӗ.

Унӑн ӗҫне хутшӑннисем Муркаш районӗнчи «Свобода» тата «Сеятель» колхозсенче пулса курчӗҫ, сысна фермисен коллективӗсен ӗҫӗ-хӗлӗпе паллашрӗҫ. Ҫав колхозсен председателӗсем К. Е. Сретинскийпе Х. Я. Волков сысна ӗрчетессине мӗнле йӗркелени ҫинчен каласа пачӗҫ, ферма ҫурчӗсене, выльӑх-чӗрлӗхӗсене кӑтартрӗҫ. Ферма ӗҫченӗсем хӑйсен ӗҫӗпе, кану условийӗсемпе паллаштарчӗҫ.

Малалла семинар «Ромашка» профилакторин кино кӑтартмалли залӗнче иртрӗ. Унта РСФСРти Хура тӑпраллӑ мар зонӑри Госагропромӑн сысна ӗрчетекен пай начальникӗ Н. С. Руденко тата Чӑваш АССР Госагропром председателӗн заместителӗ В. Я. Шадриков тухса каларӗҫ.

Семинарта Орел, Киров, Тула, Мускав облаҫӗсен, Удмурт, Мордва автономиллӗ республикӑсен представителӗсем хӑйсен ӗҫ опычӗпе паллаштарчӗҫ. Муркаш районӗнчи выльӑх-чӗрлӗх пӑхакансен ӗҫне пысӑк хак пачӗҫ. Чӑваш республикинче сысна ашӗ туса илес тӗлӗшпе пӗчӗк фермӑсен майӗсемпе пӗлсе усӑ курнине ырларӗҫ.

Семинар ӗҫне РСФСРти Хура тӑпраллӑ мар зонӑри Госагропромӑн Главживотноводпром председателӗн пӗрремӗш заместителӗ Ю. В. Горбунов, КПСС обкомӗн секретарӗ М. Я. Якимов хутшӑнчӗҫ.

**С. КАРЯГИН.**

## ТӐВАН
## СССР
## ҪӖРШЫВРА

ТАСС
КОРРЕСПОНДЕНЧӖСЕМ
ПӖЛТЕРЕҪҪӖ

### Кишинев

Ҫӗнӗ ҫултан пуҫласа Кишиневри граждан вӑрҫи геройӗсен Г. И. Котовскийпе С. Г. Лазо государство музейӗ хуҫалӑхра тытса пымалли ҫӗнӗ условисем ҫине куҫнӑ. Турист организацийӗсемпе предприятисен, республикӑри шкулсен ыйтӑвӗсене тивӗҫтерес тӗлӗшпе договорсем туса, вӑл республикӑри ҫапӑҫупа революци мухтавӗн вырӑнӗсем тӑрӑх автобуссемпе экскурсие илсе ҫӳрет, лекцисем ирттерет. Пухӑннӑ укҫа-тенкӗпе музей сотрудникӗсен пурӑнӑҫне лайӑхлатма, экспонатсене пуянлатма уса курать.

### Орел

Орел облаҫӗнчи Ливны район больници чи ҫӗнӗ йышши медицина техникипе диагностика аппаратури туянма пултарать. «Ливгидромаш» пӗрлешӳпе Орел облаҫӗнчи пӗрремӗш «Ливны» агропромышленность комбиначӗн коллективӗсем медиксем валли валюта уйӑрса панӑ. Облаҫри ытти предприятисемпе организацисем те сиплев учрежденийӗсем валли укҫа-тенкӗ куҫарма тытӑннӑ. Ҫакна тума чикӗ леш енчи партнерсемпе тӳрӗ ҫыхӑнусем йӗркелени пулӑшнӑ.

### Ҫӗнӗ Уренгой

Тюмень облаҫӗнчи Ҫӗнӗ Уренгой хулинчи ҫӗнӗ хваттерсене куҫакансем чикӗ леш енчи партнерсемпе суту-илӳ ҫыхӑнӑвӗ йӗркеленин ҫӗнӗ формисене пысӑка хурса хакланӑ. Унччен пушӑ тӑнӑ «Кил-ҫурт валли таварсем» магазинра пилӗк тӗслӗ илемлӗ гарнитур сутма кӑларнӑ. Ку сӗтел-пукана Ҫӗнӗ Уренгоя Румынирен илсе килнӗ. Тӑванла ҫӗршыва вара государство заказӗнчен ирттерсе хатӗрленӗ ҫутҫанталӑк газне ӑсатнӑ.

### Сыктывкар

Сыктывкар хула Совечӗн ӗҫтӑвкомӗ телевидени пулӑшнипе Коми АССР столици ҫыннисемпе ӗҫлӗ ҫыхӑнусем тытма, вӗсемпе дискуссисем ирттерме шухӑшлӑ. Республикӑри телевиденипе радио государство комитечӗ ҫумӗнче хуҫалӑх расчечӗпе ӗҫлекен «Виҫҫӗмӗш канал» производствӑпа творчество пӗрлешӗвӗ туса хунӑ. Ҫӗнӗ ӗҫе виҫҫӗмӗш программӑпа рекламӑсем памашкӑн, хӑйсен ситӗнӗвӗсемпе паллаштарма право илнӗ предприятисемпе организацисем укҫа-тенкӗпе пулӑшаҫҫӗ.

# ТАПЧӐР ҪӐЛКУҪҪЕМ!

ПУРНАҪРА пулса иртекен улшӑнусене витӗрех курас тесен, чылайранпа ҫитмен яла-хулана тепре пустарӑнса тухмалла, унччен сӳренӗ ҫулсем тӑрӑх ҫӗнӗ йӗр хывмалла. Вара кивви куҫран сухалнине, ҫӗнӗ хунав паркарах аталаннине ӑнланса илетӗн...

Ҫак чӑнлӑха Йӗпреҫ поселокӗнче пулсан лайӑх туйса илтӗм. Шупашкар — Улатӑр автобусран ҫӗнӗ автостанцире анса юлтӑм. Пысӑк, тирпейлӗ ҫурт. Шалта — ҫула тухнисем валли аслӑ зал, унта пурте йӗркеллӗ, меллӗ. Ӗлӗкхи автостанцин йывӑҫ ҫурчӗ поселок варринчеччӗ. Ҫӗннине вара Йӗпреҫ тулашнерех кӑларнӑ. Ку вӑл хӑех — экологишӗн тӑрӑшни. Сӑмах май каласан, автомагистральсене те сывӑх ҫулсенче поселок айккине кӑларма палӑртнӑ.

Автостанцирен поселок центрне автобус та ҫӳрет иккен. Анчах, ҫӗннине курас тесен, ҫуран утнине мӗн ҫиттӗр? Акӑ, пысӑк хуларинчен нимпе те кая мар тепӗр ҫурт — районти Культура керменӗ. Ҫыхӑну узелӗн виҫӗ хутлӑ ҫуртне тепрер область центрӗ те ӑмсанмалла. Ача-пӑча магазинӗ, библиотека валли чӑннипех хӳхӗм ҫуртсем лартнӑ. Килен-каянсем чарӑнмалли йывӑҫ ҫурта та шыраса тупаймарӑм. Паян Йӗпреҫре виҫӗ хутлӑ «Чӗкеҫ» хӑна ҫурчӗ пур. Унӑн кантӑкӗсенчен поселок центрӗ ывӑҫ тупанӗ ҫинчи пек курӑнать. Тӗлӗнмелле, пӗр вунпилӗк ҫул каярах кунта уйрӑм ҫынсен ҫурчӗсем йӗркерен ларатчӗҫ, вӗтӗр-шакӑр кантурсем пурччӗ. Халӗ нумай хутлӑ пурӑнмалли ҫуртсем ӳссе ларнӑ. Юнашарах строительсем тата икӗ ҫурт никӗсне хываҫҫӗ.

— Кунтах поселок Совечӗн ҫурчӗ те ӳссе ларать, — тет ӗҫтӑвком секретарӗ В. Волкова. — Авӑ, 1-мӗш вӑтам шкулӑн виҫӗ хутлӑ ҫурчӗ. Йӗпреҫри тепӗр вӑтам шкул та ҫӗнӗ ҫурта куҫрӗ. Часах Йӑла комбиначӗн корпусне купалама пуҫлаҫҫӗ. Ҫапла, ӗҫлетпӗр хамӑр май, пурнӑҫран юлас теместпӗр.

Поселок Совечӗн ӗҫтӑвкомӗ халлӗхе кивӗ ҫуртра-ха, ҫӗннине тума тытӑнассӗ ҫеҫ. Ҫапах та ӗҫтӑвкомӑн виҫӗ пӳлӗмне ҫынсем тӗрлӗ ыйтупа вӗсемсӗрех килсе тӑнинчен те Совет влаҫӗн вӑйӗ хушӑнса пынине ӑнланма пулать. Акӑ, Кутузов урамӗнчи обществӑлла комитет председателӗ В. Тимуков хӑйне мӗн хумхантарни ҫинчен тӗплӗн шухӑшласа, васкамасӑр каласа парать.

— Ҫакӑ килӗшмест мана. Пурте ӑна та, кӑна та ыйтаҫҫӗ. Парса ҫитерейменӗн, — тет Виталий Иванович. — Мӗншӗн-ха кӑштах урӑхла шутлас мар. Хамӑрӑн вӑй пӗтнӗ-и, хевте ҫитмест-и? Чӑваш ӗлӗкрен ҫапла каланӑ: халӑх сурать — кӳлӗ пулать. Кашни ҫын ҫанӑ тавӑрсах пикенсен, апат-ҫимӗҫ, ҫурт-йӗр программине чылай хӑвӑртрах тата государство укҫи-тенкине перекетлесерех татса пама май килетчӗ.

## Суйлав умӗн

Ватӑ ҫын В. Тимуков коммунист. Совет органӗсенче нумай хушӑ ӗҫленӗскер, чылайранпа пенсионер шутланать. Анчах пӗр самант та ӗҫсӗр ларас ҫук вӑл. Ахальтен-и ӑна пӗр урамра пурӑнакансем яланах хӑйсен председательне суйлаҫҫӗ. Кутузов урамӗ пысӑк мар — 21 кил. Пурин те харпӑр хӑй лартнӑ тирпейлӗ ҫурт. Нумайӑшӗ пенсие тухнӑ. Анчах пурнӑҫ сӳнмест. Пӗчӗк урамра пурӑнакансем 14 ӗне усраҫҫӗ, икшер сысна самӑртаҫҫӗ. Хур-кӑвакал, чӑх-чӗп йышлӑ. Чӑн та, пахча вырӑнӗ ҫичӗ сотӑй ҫеҫ. Ҫапах та ҫакӑн пек пӗчӗк хуҫалӑх та харпӑр хӑй валли тӗрлӗ ҫимӗҫ ҫителӗклӗ хатӗрлеме кӑна мар, государствӑна самаях сутма та пултарать. Кунта В. Тимуков тӗслӗхӗ паха. Пӗлтӗр вӑл килти хуҫалӑхран 3,2 тонна сӗт, 250 килограмм аш сутнӑ.

— Чылайӑшӗ выльӑх-чӗрлӗх ытларах тытма хатӗр, анчах пулӑшӑвӗ сахал, — пӑшӑрханать ветеран. — Утӑ-улӑм хатӗрлеме, кӗтӳ кӗтмелли вырӑнсем уйӑрса пама пулӑшсан, эпир темиҫе хут ҫулӑмлӑрах тавӑрса параттӑмӑр. Халӗ, авӑ, сутнӑ продукцишӗн комбикорм та ҫителӗклӗ илейместпӗр.

— Канӑҫсӑр ҫын вӑл, халӑха нумай ӗҫе пуҫаруллӑн тума явӑҫтарать, — ӑнлантарать ӗҫтӑвком секретарӗ. — Поселокри 63 урамра пурте Виталий Иванович пек тимлӗн тӑрӑшсанччӗ! 70 депутатран ҫурри хӑть хӑйсен тивӗҫне чӑннипех ӑнланса илсен тата!

АХАЛЬТЕН ҫапла ӗмӗтленмест Вера Михайловна. Советсене тулли власть парас тени вӑл шӑпах вӗсен ӗҫне халӑх хастар хутшӑнмаллине пӗлтерет. Умра — ҫав тери пысӑк ӗҫ. Ҫирӗплетнӗ программӑпа килӗшӳллӗн, районта ҫитес ҫул 10,7 пин, вунвиҫҫӗмӗш пилӗкҫуллӑхра вара — 28,3 пин тӑваткал метр чухлӗ пурӑнмалли ҫуртсем туса лартмалла. Ытларах пайне — Йӗпреҫ поселокӗнче.

Пурӑнмалли ҫурт-йӗр ыйтӑвӗ ҫивӗччине ҫак цифрӑсем те ҫирӗплетеҫҫӗ. Паянхи куна поселок Советӗнче хваттер черетне тӑнисем 329 ҫын, унсӑр пуҫне предприятисемпе организацисенче 376 ҫын. Кӑҫал 94 хваттер ӗҫе кӗртнӗ, 8 ҫын уйрӑм ҫурт лартнӑ. Япӑх мар темелле. Анчах строительствӑна вӑйлатмалли майсем пур-ха.

Чылаях пысӑк промышленность предприятийӗсем, строительствӑпа монтаж организацийӗсем вырнаҫнӑ поселокра — вӑрман комбиначӗ, сӗтел-пукан фабрики, электроизмерительнӑй приборсен завочӗ, йывӑҫ япаласем тӑвакан завод, кирпӗч завочӗ, апат-ҫимӗҫ комбиначӗ, юсавпа техника предприятийӗ, юсавпа строительство управленийӗ, ҫул-йӗр юсакан тата тӑвакан управлени, «Агропромстрой» пӗрлешӗвӗн строительство организацийӗ. Пурте тенӗ пекех тулли хуҫалӑх расчечӗ ҫине куҫнӑ. Ҫапла вара социаллӑ пурнӑҫа аталантармашкӑн укҫа-тенкӗ нумайрах уйӑрма пултараҫҫӗ. Юлашки вӑхӑтра нумай хваттерлӗ, хӑтлӑ ҫуртсем туса лартнӑ, ҫӗнӗ микрорайон йӗркеленӗ. Кунпа пӗрлех поселок Совечӗ харпӑр хӑй укҫи-тенкипе ҫурт-йӗр ҫавӑрма шутлакансене те манмасть. Кӑҫал кӑна, вӗсен ыйтӑвӗсене тивӗҫтерсе, 15 гектар ҫӗр лаптӑкӗ уйӑрса панӑ, унта 200 ҫурт вырӑнӗ.

— Ку вӑл ӗҫ пуҫламӑшӗ кӑна-ха, — тет В. Волкова. — Чи йывӑрри — ҫурт-йӗр лартакансене материалсем тупса парасси, ытти ҫинчен пулӑшасси. Халлӗхе кирпӗч, цемент, йывӑҫ материалсем питӗ сахал. Техника ҫук. Поселок Совечӗн укҫи-тенкипе тӑвакан ӗҫсем валли те Канашри организацисенчен транспорт хатӗрӗсем тилмӗрсе чун тухать. Ӗҫтӑвком председателӗ Г. Петров кашни эрнере тенӗ пек миҫе хут ҫитет-ши унта?..

Тӗрӗс пӑшӑрханать Вера Михайловна. Вӑл хӑй те, ӗҫтӑвком председателӗ Г. Петров та совет ӗҫӗнче ҫӗнӗ ҫынсем. Геннадий Михайлович ҫулталӑк ҫурӑ каярах ҫеҫ-ха юсавпа строительство управленийӗн тӗп инженерӗ пулнӑ. В. Волкова, иртнӗ суйлав хыҫҫӑн секретаре суйличчен, районти тӗп перекет кассине ертсе пынӑ. Вӗсем социаллӑ пурнӑҫпа экономикӑна аталантармалли плана, суйлавҫӑсен наказӗсене ӗҫе кӗртме нумай вӑй хураҫҫӗ. Халиччен 15 наказран пӗри кӑна пурнӑҫланман. Халӗ ӑна та татса параҫҫӗ — Пушкин урамӗнче магазин ҫурчӗ тума тытӑннӑ.

Поселок Совечӗ чӑн-чӑн пуҫарулӑх кӑтартни ҫакӑнтан та курӑнать. Халиччен пӗчӗк учрежденисем хӑйсене валли хваттерсем тума вӑй ҫитерейменччӗ. Мӗншӗн-ха вӗсен укҫи-тенкине пӗрлештерес мар? Ҫапла майпа туса лартнӑ та поселок Совечӗн 50 хваттерлӗ ҫуртне. Унта банк учрежденийӗсенче, суту-илӳ предприятийӗсенче ӗҫлекенсен семйисем пурӑнма куҫнӑ. Ҫак меслет малалла сарӑлать.

Укҫа-тенкесӗр власть вӑйӗ пулас ҫук. Ҫапла шутлать ӗҫтӑвкомӑн тӗп бухгалтерӗ Е. Григорьева. Ҫирӗм ҫичӗ ҫул ҫак ӗҫре Евгения Павловна. Поселок валли уйӑрнӑ укҫа-тенкӗн кашни пусне шутра тытать вӑл. Анчах бюджет уҫӗк ҫав. Акӑ, 1989 ҫулта 545 пин тенкӗ уйӑрса панӑ. Вӑл пӗтӗмпе тенӗ пекех шкулсене, сывлӑх, культура тата ача-пӑча учрежденийӗсене тытса тӑма каять. Поселока тирпей-илем кӗртме 43 пин тенкӗ, коммуналлӑ хуҫалӑх нушисем валли 52 пин тенкӗ ҫеҫ уйӑрнӑ. Ку вӑл питӗ ҫителӗксӗр. Ҫавӑнпа вырӑнти Совет бюджетне йӗркелемешкӗн предприятисемпе организацисен тупӑшӗн пӗр пайне куҫарса памаллах. Уй чухне чылай пысӑкрах ӗҫсене тытӑнма вӑй ҫитӗччӗ.

Малашлӑх ҫакӑнпа ҫыхӑннӑ та. Тӗслӗхрен, вунвиҫҫӗмӗш пилӗкҫуллӑхра Йӗпреҫ поселокне ҫутҫанталӑк газӗ кӗртсе ҫитермелле, урамсене пурне те асфальт сармалла. Паллах, ҫак ӗҫсене предприятисемпе организацисем тивӗҫлипе хутшӑнмасӑр пурнӑҫа кӗртейменӗ. Халлӗхе вара вӗсене ертсе пыракансем хушшинче ҫакна ӑнланакансем сахал-ха. «Агропромхимия» пӗрлешӳ совечӗн председателӗ В. Пыркин — поселок Совечӗн депутачӗ, анчах вӑл сессисенче те сайра-хутра ҫеҫ пулать. Ытти хӑшпӗр хуҫалӑх руководителӗсем поселокри социаллӑ пурнӑҫ ыйтӑвӗсене татса парассинчен, тӗрлӗ сӑлтав шыраса, пӑрӑнма тӑрӑшаҫҫӗ.

Суйлавҫӑсен шанӑҫне тӳрӗ кӑмӑлпа пурнӑҫлакан, Совет пуҫаракан кашни ӗҫе хастар хутшӑнакан депутатсем хушшинче районти строительство организацийӗн мастерне Л. Антоновӑна, вӑрман комбиначӗнче станочницӑра ӗҫленӗ А. Домниковӑна, ҫарӗҫ комиссариатӗнчи С. Иванов водителе асӑнчӗҫ. Вӗсем округри суйлавҫӑсене сахал мар ырӑ ӗҫ тума хутшӑнтараҫҫӗ, яланах тачӑ ҫыхӑну тытаҫҫӗ. Акӑ пӗр тӗслӗх. 82 ҫулхи А. Лебедева, пӗччен пурӑнаканскер, хуралтӑсем юхӑнса ҫитнипе аптранӑ. Станислав Семенович Иванов депутат ватӑ ҫын нушине ӑнланнӑ, ӑна тӗрлӗ кантурсем тӑрӑх чуптарса ҫӳретмен. Темиҫе ҫынна пухнӑ та хӑйсен вӑйӗпе ҫӗнӗ сарай туса панӑ. Поселок Совечӗн бюджетӗнчен тӑлӑха юлнӑ ватӑ ҫынсене уйӑхра 30-шар тенкӗ парса тӑни те депутатсен тимлӗхӗ ҫинчен калать. Пӗлтӗр ҫак тӗллевпе 1.420 тенкӗ уйӑрнӑ.

— Куратӑр-и, мӗнле ӳссе илемленет пирӗн Йӗпреҫ, — савӑнӑҫлӑн калаҫӗ поселок Совечӗн ӗҫтӑвкомне пынӑ ҫынсенчен пӗри. — Йӗпреҫе хула ятне памалла, теҫҫӗ. Чӑнах-ши?

Татса калаймӑпӑр. Юрӗ, Йӗпреҫ хули — ырӑ ӗмӗт пултӑр. Анчах рабочисен поселокӗ, район центрӗ хула ячӗ илмесӗр те чӑннипех савӑнтарать. Кунпа пӗрлех ыйтусем те кӑткӑсланаҫҫӗ. Вӗсене ялан асра тытасси, ҫине тӑрса пурнӑҫласси — вырӑнти власть органӗн, халӑх депутачӗсен чысла тивӗҫӗ. Поселокӑн паянхи пурнӑҫӗнче, ҫӑн-ҫӑпатӗнче ҫӗнетӗвӗн хӑватлӑ ҫӑлкуҫӗсем пуррине куратпӑр.

**А. НИКОЛАЕВ.**



Мускаври кашни кӗпер хӑйне евӗрлӗ илемӗпе илӗртет. Вӗсенчен чылайӑшӗ истори палӑкӗ пулса тӑрать. Сӑмахран, Бородино кӗперне 1812 ҫулхи Отечественнӑй вӑрҫӑ тата Бородино патӗнчи ҫапӑҫу пуҫнӑранпа 100 ҫул ҫитнӗ тӗле тунӑ.

Мускаври чи илемлӗ кӗперсенчен пӗри — сакӑнса тӑракан Крым кӗперӗ. Унӑн тӑршшӗ — 700 метр. Авторӗсем

## Ҫивӗч сигнал

# ЮХАНШЫВ... ФЕРМӐРАН ПУҪЛАНАТЬ

**Кам пӗлмест ӗнтӗ юханшывсем ӑҫтан пуҫланнине: ҫӑлкуҫран, кӳлӗрен, шурлӑхран... Чебоксарка текен юханшыв вара, ӗненетӗр-и, ӗненместӗр-и — фермӑран «ҫула тухать». Ӗненменнисене адресне те калӑпӑр, кайсах курма пултаратӑр: Шупашкар районӗ, Явӑшри пушмак пӑрусем усракан комплекс.**

Шоссепе юнашарах вӑл. Ытти фермӑсенчен нимӗнпех те уйрӑлса тӑмасть ҫак ферма. Укӑлчапа юнашар, 150—200 пушмак пӑру тытаҫҫӗ кунта. Ҫак йышпа, паллах, самаях пысӑк юханшыв пуҫарса яма пулать ӗнтӗ. Ҫавӑнпа та-и, тен, тислӗк шывӗ тӳрех ҫырмана шарласа ан кайтӑр тесе, фермӑпа юнашарти варта пӗве тунӑ. Ҫакӑнта пухӑнать чи малтан тасамарлӑх. Пӗверен тӳрех ҫырмана кӗрлесе тухать, шоссе айӗпе хывнӑ пӑрӑх витӗр тахсан Чебоксарка шывӗ юхса тухнӑ ҫӑлкуҫ патне ҫул тытать.

Юлашки вӑхӑтра юханшывсем типсе, ӑшӑхланса пыни пирки калаҫаҫҫӗ. Чебоксарка шывӗ вара пӗр 300 метр «вӑрӑмланнӑ». Шӑпах ҫавӑн чухлӗ виҫе уйӑрса тӑрать те ӗнтӗ фермӑпа ҫӑлкуҫа.

Халӗ ҫак хушӑ сарӑ-симӗсрех тӗслӗ пӑрпа витӗннӗ. Ҫуллахи вӑхӑтра шыв сапсарӑ тӗслӗ пулать.

Эх, юхать тислӗк Чебоксарка шывӗпе хуланалла, Атӑлалла васкать. Хамӑр тӗлӗнетпӗр-ха: ӑҫтан муртан ӗрчесе кайнӑ Шупашкар тинӗсӗнче сальмонеллӑсем, вар-хырӑм чирне ертекен ытти микробсем? Ара, аса илер-ха: иртнӗ ҫулла вӗсен «кӗтӗвӗсем» нормӑпа пӑхнинчен 70 хут ытларах кӗшӗлтетнӗ Атӑлта. Шыва кӗме чарчӗҫ пӗр вӑхӑт. Шыва чӑмса тухсан та, кӗсел ӑшне лекнӗ теййӗн, сӗлеке пек тӑсӑлатчӗ шывӗ.

— Мен вӑл ферма пысӑк юханшывшӑн, — тутине чалӑштарса аллине сулчӗ Явӑш ферминчи арендаторсенчен пӗри. Хӑй ятне-хушаматне те пӗлтересшӗн пулмарӗ. «Манӑн совхозра татах пурӑнмалла-ха, хваттер те илмелле», — терӗ. — Чантӑр тӗлне ҫитиччӗнех тасалса пӗтет тислӗк шывӗ. Ӗҫме те юрать...

Ҫаплах-ши, ҫаплах мар-ши, черре кӗрсе тӑмапӑр. Анчах за тислӗк шыва тасатманни каламасарах паллӑ. Тепӗр километртанах ҫӳллӗ тӳпемере урах ӗне ферми сарӑлса ларать. Чантӑр ферми вӑл. Ку та «Чебоксарский» совхозӑн.

Трамплин ҫинчен сикнӗ евӗр тислӗк шывӗ тӳрех Чебоксарка шывне чӑмать.

Ӗлӗкрех ку юханшыва виҫӗ ҫырмари ҫӑлкуҫсем «тӑрантарса» тӑнӑ, халӗ вара татах тепӗр «ҫӑлкуҫ» хушӑннӑ. Шӑпах Чантӑр фер- лӗк хуҫи — дирекци. Арендаторсемшӗн кун пек чухне, паллӑ ӗнтӗ, ик айкки те тӑрӑйкки, тислӗке тирпейлӗ упрассишӗн тӑрӑшмасан та юрать.

Чантӑрта вара тислӗк хуҫалӑхне йӗркене кӗртесси вӗҫӗ-хӗрри те курӑнмасть.

— Ҫапла, ҫапла, пӗлетпӗр, пӗлетпӗр... Ҫутҫанталӑка сыхлас енӗпе ӗҫлекен комитет паян-и, ыран-и килсе «мунча кӗртессе» кӗтсех тӑратпӑр, — пытармасть хӑйӗн шухӑшне совхозӑн тӗп зоотехникӗ Г. Николаев. — Тепӗр ҫул, тен, тислӗк шӗвекне пухмалли канавсем туса хатӗрлӗпӗр.

Ҫакна каласа хӑварӑпӑр: хальхи вӑхӑтра ҫутҫанталӑка пӗр ҫул хушши вараланине тасатма икӗ ҫул кирлӗ, тепӗр ҫултан ҫак ӗҫе туса ирттерме икӗ хут ытларах вӑхӑт иртет, икӗ хут ытларах укҫа-тенкӗ тӑкаклама тивет. Ҫулсерен ӳссе пырать ҫутҫанталӑка тасатас ӗҫ калӑпӑшӗ. Ҫавӑнпа ытлашши ӗҫ тупас, ытлашши укҫа-тенкӗ тӑкаклас тетпӗр пулсан, ҫутҫанталӑка сыхлас ӗҫе ырӑна хӑварар... Шупашкарти «Контур» евӗр. Ҫак предприятири тасатмалли сооруженисем пӗр кун та ӗҫлемен. Завода хута янӑранпах пӗр тасатмасӑр юхтарса тӑрать вӑл тӗрлӗрен наркӑмӑшлӑ шӗвексене. Чӑваш АССР Ҫутҫанталӑка сыхлас енӗпе ӗҫлекен государство комитечӗн лабораторийӗн пай начальникӗ Н. И. Ильина ҫапла пӗлтерчӗ:

— Чебоксаркӑра тимӗр, цинк, нефть продукчӗсем кашни кубометр шывра 5,94 миллиграмм, нормӑпа — 0,05 ҫеҫ пулмалла. 118 хут ытла ҫак тасамарлӑх шывра.

Вуншар ҫул каялла та ҫаплах пулнӑ-ши Чебоксарка шывӗ?

— Ҫук. Юханшыв пирӗн ял ҫумӗнчи виҫӗ ҫырмаран юхса тухатчӗ. Варринчи вархӑрра пысӑк ҫӑлкуҫ. Унта 70—80 лаша шӑварма анаттӑмӑр. Халӗ лашисем те ҫук, ҫӑлкуҫӗ те никама та кирлӗ мар, пӗтӗмпех пӗтрӗ, — пӑшӑрханса калаҫать Явӑш ҫынни А. И. Ефиркин.

— Ӗҫмелли шыва та Чебоксаркӑран илеттӗмӗр. Ҫичӗ арман пулнӑ юханшыв тӑрӑх. Пулла та, шыва кӗме те Атӑла кайман эпир. Чебоксаркӑрах нумайччӗ вӗсем, шывӗ те тарӑнччӗ. — Протоçĕршыва вара государство заказĕнчен ирттерсе хатĕрленĕ çутçанталăк газне ăсатнă.

## Сыктывкар

Сыктывкар хула Совечĕн ĕçтăвкомĕ телевидени пулăшнипе Коми АССР столицин çыннисемпе ĕçлĕ çыхăнусем тытма, вĕсемпе дискуссисем ирттерме шухăшлать. Республикăри телевиденипе радио государство комитечĕ çумĕнче хуçалăх расчечĕпе ĕçлекен «Виççĕмĕш канал» производствăпа творчество пĕрлешĕвĕ туса хунă. Çĕнĕ ĕçе виççĕмĕш программăпа рекламăсем памашкăн, хăйсен çитĕнĕвĕсемпе паллаштарма право илнĕ предприятисемпе организацисем укçа-тенкĕпе пулăшаççĕ.

## Клинцы

Брянск облаçĕнчи Клинцы хулинчи тин çеç хута кайнă ăтă-пушмак фабрикинче пысăк пахалăхлă ăтă-пушмакĕн пĕрремĕш партине туса хатĕрленĕ. Ăна магазинсене ăсатнă. Проектпа палăртнă хăватпа ĕçлеме тытăнсан, фабрика çулталăкра ача-пăча валли 600 пин мăшăр тата хĕрарăмсем валли 400 пин мăшăр ăтă-пушмак хатĕрлеме тытăнĕ.

## Ровно

Пурăнмалли çурт-йĕрсене пăхса тăракан кантурсем çумĕнче йĕркеленĕ хĕрарăмсен совечĕсем хулари пĕччен пурăнакан ватăсене пулăшу пама тытăннă: ыркăмăл фондĕнчен пулăшу кирлисем валли укçа-тенкĕ, кĕпе-тумтир уйăрса параççĕ. Вĕсене тÿлевсĕр çитереççĕ, çавăн пекех апат-çимĕç, эмелсем, промышленность таварĕсем кÿрсе параççĕ.

## Йошкар-Ола

Мари АССРĕнчи Медведев районĕнчи хура тăпраллă çĕрсене экологи тĕлĕшĕнчен таса продукци илмелли зона туса хунă. Механизациленĕ пулăх отрячĕсем кăçалхи сезонра çеç уй-хире миллион тонна ытла торфпа тислĕк кăларĕç. Ученăйсем шутланă тăрăх, çакă уй-хире çумкурăкран хăтарĕ, çапла вара пестицидсемпе, ытти имçамсемпе усă курмасăрах тĕрлĕрен культура туса илме май пулĕ.

## Липецк

Çулталăкра миллион холодильник — çакăн пек çĕнĕ заводăн проектра палăртнă хăвачĕ. Ăна Çĕнĕ Липецк металлурги комбиначĕн территорийĕнче тума пуçланă. Çĕнĕ предприяти тăвас енĕпе Итали «Мерлони» фирмипе килĕшÿ тунă. Йăлари кăткăс техника туса кăларасси — комбинат аталанăвĕн пысăк малашлăхлă çул-йĕрĕсенчен пĕри. Çывăх вăхăтра металлургсем çавăн пекех Хĕвеланăçĕнчи çĕнĕ технологисемпе усă курса пысăк класлă видеомагнитофонсем туса кăларассине йĕркелеме шанаççĕ.

---

Сапах та ĕçтăвкомăн висĕ пÿлĕмне çынсем тĕрлĕ ыйтупа вĕçĕмсĕрех килсе тăнинчен те Совет власĕн вăйĕ хушăнса пынине ăнланма пулать. Акă, Кутузов урамĕн-

тума яваçтарать, — ăнлантарать ĕçтăвком секретарĕ. — Поселокри 63 урамра пурте Виталий Иванович пек тимлĕн тăрăшсанччĕ! 70 депутатран çурри хăть хăйсен тивĕç-

кăна-ха, — тет В. Волкова. — Чи йывăрри — çурт-йĕр лартакансене материалсем тупса парасси, ытти енчен пулăшасси. Халĕхе кирпĕч, цемент, йывăç материалсем

маллах. Ун чухне чылай пысăкрах ĕçсене тытăнма вăй çитĕччĕ.

Малашлăх сакăнпа çыхăннă та. Тĕслĕхрен, вуниккĕмĕш пилĕкçуллăхра Йĕпреç

ти власть органĕн, халăх депутачĕсен чыслă тивĕçĕ. Поселокăн паянхи пурнăçĕнче, сăн-сăпатĕнче сĕнетĕвĕн хăватлă çăлкуçĕсем пуррине куратпăр.

А. НИКОЛАЕВ.



Мускаври кашни кĕпер хăйне евĕрлĕ илемĕпе илĕртет. Вĕсенчен чылайăшĕ истори палăкĕ пулса тăрать. Сăмахран, Бородино кĕперне 1812 çулхи Отечественнăй вăрçĕ тата Бородино патĕнчи çапăçу пулнăранпа 100 çул çитнĕ тĕле тунă.

Мускаври чи илемлĕ кĕперсенчен пĕри — çакăнса тăракан Крым кĕперĕ. Унăн тăршшĕ — 700 метр. Авторĕсем Б. Константинов инженерпа А. Власов архитектор.

Пысăк Чул кĕпер, Калинински, Москворецки кĕперĕсемпе ыттисем Мускав çыннисене пысăк усă кÿнисĕр пуçне столицăна илем кĕртеççĕ, унăн ĕлккен сăн-сăпатне татах та пуянлатаççĕ.

Ÿкерчĕк çинче: 1905 çул ячĕпе хисепленекен кĕпер.

ТАСС фотохроники.

---

лаштарса аллине сулчĕ Явăш фермичи арендаторсенчен пĕри. Хăй ятне-хушаматне те пĕлтересшĕн пулмарĕ, «манăн совхозра татах пурăнмалла-ха, хваттер те илмелле», — терĕ. — Чантăр тĕлне çитиччен тасалса пĕтет тислĕк шывĕ. Ĕçме те юрать...

Çаплах-ши, çаплах мар-ши, чĕрре кĕрсе тăмапăр. Анчах та тислĕк шыва тасатманни калăмасăрах паллă. Тепĕр километртанах çÿллĕ тÿремре урăх ĕне ферми сарăлса ларать. Чантăр ферми вăл. Ку та «Чебоксарский» совхозăн.

Трамплин сиччен сикнĕ евĕр тислĕк шывĕ тÿрех Чебоксарка шывне чăмать.

Ĕлĕкрех ку юханшыва виçĕ çырмари çăлкуçсем «тăрантарса» тăнă, халĕ вара татах тепĕр «çăлкуç» хушăннă. Шăпах Чантăр ферми ĕнтĕ. Кунта та йĕрке çук. Тислĕке кирлĕ пек тыткаламаççĕ, упрамаççĕ. Юханшыва та вараласçĕ, паха удобрение сая яраççĕ. Укçа шывпа юхать.

— Çапла, — килĕшеççĕ Явăш фермичче ĕçлекенсем. — Кунсерен тислĕк кăна 80—100 тенкĕ тупăш парса тăма пултарать. Илсе тухса тăкатпăр ăна, анчах усси çук.

Ку фермăра арендăпа ĕçлеççĕ. Звенона В. Гаврилов ертсе пырать. Совхоз дирекцийĕ ĕçлекенсене выльăх-чĕрлĕхне шанса панă, тислĕкне «пама хĕрхеннĕ». Тис-

— Чебоксаркăра тимĕр, цинк, нефть продукчĕсем кашни кубометр шывра 5,94 миллиграмм, нормăпа — 0,05 çеç пулмалла. 118 хут ытла çак тасамарлăх шывра.

Вуншар çул каялла та çаплах пулнă-ши Чебоксарка шывĕ?

— Çук. Юханшыв пирĕн ял çумĕнчи виçĕ çырмаран юхса тухатчĕ. Варринчи варлăхра пысăк çăлкуç. Унта 70—80 лаша шăварма анаттăмăр. Халĕ лашасем те çук, çăлкуçĕ те никама та кирлĕ мар, пĕтĕмпех пĕтрĕ, — пăшăрханса каласать Явăш çынни А. Н. Ефиркин.

— Ĕçмелли шыва та Чебоксаркăран илеттĕмĕр. Çичĕ арман пулнă юханшыв тăрăх. Пулла та, шыва кĕме те Атăла кайман эпир. Чебоксаркăрах нумайччĕ вĕсем, шывĕ те таранччĕ, — Протопопиха ялĕнчи 75 çулхи С. А. Григорьевăн пăшăрханулла асилĕвĕ ку.

Шупашкарта, Чебоксаркăсăр пуçне, тата тăватă юханшыв: Трусиха, Кайбулка, Сугутка, Кăшăм. Пурин те пĕр шăпа — тасамарлăха юхтармалли канавсем пулса тăчĕç вĕсем. Мĕнле сыватмалла вĕсене? Çакăн пирки хытах шухăшламалла паян.

**А. ФИЛИППОВ.**
**Чăваш АССР Сутçанталăка сыхлас енĕпе ĕçлекен государство комитечĕн инспекторĕ.**

---

*Пирĕн интервью*

# АЧАСЕМ ÇАПКАЛАНСА АН ÇÿРЕЧЧĔР...

**СССР халăх депутачĕ Ю. Б. Сеткин — ДОСААФăн Шупашкарти авиаципе спорт клубĕн парашютистсен звенин командирĕ. Çамрăксене çар ретне тăма хатĕрлес тĕлĕшпе нумай вăй хурать. Вăл ертсе пынипе нумайăшĕ ăста парашютист пулса тăнă, спортпа туслашнă. Унăн тĕллевĕ — ÿссе пыракан ăрăва пирĕн моральпе тата принципсемпе килĕшсе тăракан воспитани парасси. Нумаях пулмасть унпа пирĕн корреспондент тĕл пулса калаçнă.**

**— Юрий Борисович, суйлав умĕнхи кĕрешÿре Эсир ыттисенчен, çав шутра экономистран, писательрен, журналистран, троллейбус водителĕнчен, ытти професси çыннисенчен нумайрах сасă пухрăр. Шупашкарти Ленин районĕнче пурăнакансем СССР халăх депутачĕ пулма мĕншĕн Сире, парашютистсен звенин командирне, суйларĕç-ши?**

— Тен, ку ыйтăва манăн суйлавçăсене памаллаччĕ. Ытах ыйтатăр пулсан, ответлеме пулать, паллах. Вĕсенчен чылайăшĕ пĕлтĕрхи мартăн 26-мĕшĕнче, бюллетеньсене ещĕксене ярас умĕн, эпĕ парашютпа сикме вĕрентнисĕр пуçне, ачасемпе нумай ĕçлени çинчен пĕлнех-тĕр.

Депутат пулассине мĕнрен килет-ха? Суйлавçăсем хăйсен нушисене ăнланма, çивĕч ыйтăвĕсене татса пама пултаракан çынсене çеç депутата суйласшăн-çке. Ленин районĕнче пурăнакансене вара Шупашкарта преступлени тăвасси, уйрăмах çул çитменнисем право йĕркине пăсасси ÿсни хытă шутлаттарать.

Мĕн тĕрлĕ кăна преступлени тумаççĕ пуль! Обществăри йĕркелĕхе пăсаççĕ, хĕнеççĕ, вĕлереççĕ, çаратаççĕ, мăшкăлаççĕ... Кинотеатрсем, кафесем умĕнче, парксенче, автовокзалсенче, ытти çĕрте пĕр-пĕрипе çапăçаççĕ. Хула çыннисене чылай чухне харушлăха кĕртсе ÿкереççĕ. Урам хушшинче çапăçнине пула обществăлла транспорта чарса лартнă тĕслĕхсем темиçе те пулнă. Хулигансем хăйсене ирĕклĕ туяççĕ. Кăнтăр кунĕнчех хула çыннисем çумне çулăхаççĕ. Каç пулсан вара унта та кунта ниçтан сиксе тухать. Кама та пулин хĕнеççĕ е кама та пулин мăшкăлаççĕ. Кĕскен каласан, хулара лару-тăру çăмăл мар.

Преступлени тăвассине хирĕç кĕрешеççĕ-ха. Анчах ырă улшăнусем сахалрах. Çынсем вĕсене кĕтсе-кĕтсе ывăнса çитнĕ. Темле улăпла вăй пулăшасса шанаççĕ.

**— Ачасемпе хăçан ĕçлеме тытăнтăр?**

— 1985 çулта мана, летчиксем хатĕрлекен училищĕрен вĕренсе тухсан, ДОСААФăн Шупашкарти организацине ячĕç. Эпĕ Чăваш республикинче çуралса ÿснĕ. Çавăнпа Шупашкара лайăх пĕлетĕп. Чăн та, ĕçе вырнаçсанах аэродромран киле, килтен аэродрома çеç çÿреттĕм. Вăхăт кашт иртсен вара хамăр çурт умĕнче вылякан ачасене сăнакан пултăм. Çуллахи вăхăтра вĕсем кунĕпех кĕшĕлтетеççĕ. Сисетĕп: ĕççĕр аптраççĕ. Тен, çавăнпа-и, пысăкраххисем çывăхри микрорайонсене каяççĕ. Анчах хăшпĕр чухне кăвакарнă куçсемпе килеççĕ. Паллă ĕнтĕ мĕн пулса иртни: хăйсем каларăшле, «ютсемпе» пĕр чĕлхе тупайманнипе пĕр-пĕрипе тытăçса илнĕ. Пирĕннисене самаях лекнĕ. «Ютсене» тĕл пулсан, тавăрма ĕмĕтленеççĕ. Ача-пăча чун-чĕринче мĕн пĕчĕкрен çирĕпленсе пырать çакнашкал психологи. Кашни япала çине вăй тĕлĕшĕнчен çеç пăхаççĕ. Паллах, ку ырри патне илсе çитермест.

Майĕпен ачасен нушисемпе интересленме пуçларăм. Мĕн кирлĕ, мĕн çитмест вĕсене? Çарпа патриотизм клубĕ уçас шухăш çуралчĕ. Анчах ăна пурнăçа кĕртес тесе, нумай тăрăшма тиврĕ. Кун пирки сăмах хускатсан, профсоюз, комсомол органĕсенче ман çине кусĕсене чарса пăхатчĕç. «Мĕн вăл çарпа патриотизм клубĕ? Халиччен илтмен ун пирки» — тетчĕç.

Хамăр картишĕнчи ачасене пухрăм та клуб уçасси пирки каласа патăм. Килĕшрĕ ман сĕнÿ вĕсене. Кашни каç тенĕ пек путвалта пухăнма тытăнтăмăр. Каярахпа унта юлташĕсем те çÿреме пуçларĕç. Кĕçех йыш çитмĕле çитрĕ. Занятисене ятарласа хатĕрленĕ программăпа килĕшÿллĕн ирттертĕм. Çар пĕлĕвĕ патăм, стройпа утма хăнăхтартăм, спорт ăмăртăвĕсене хутшăнтартăм, парашютпа сикме хатĕрлерĕм, десантниксен тытăçса çапăçмалли ăсталăхне алла илме пулăшрăм... Мĕн тери савăнатчĕç ачасем! Ара, кашни ачан вăйлă пулас килет-çке.

Ачасем занятисене тата обществăри вырăнта хăйсене йĕркеллĕ тытма пĕлни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чи кирли — çирĕп дисциплина. Çакна шута илмесĕр пĕр утăм та тăваймастăн. Клуба çÿрекенсем шкулта е обществăри вырăнсенче киревсĕр ĕçсем тумаççĕ-и? Хулиган ушкăнĕсемпе çыхланса кайман-и? Вĕренÿре мĕнле ĕлкĕрсе пыраççĕ? Ачасен пурнăçĕпе çыхăннă çак тата ытти ыйтусемпе интересленсех тăтăм. Астăватăп-ха, темиçе ача обществăри йĕркелĕхе пăсрĕç. Малтан вĕсемпе хам калаçрăм. Айăплă-и? Айăплă мар-и? Унтан вĕсен киревсĕр ĕçне ачасемпе пĕрле сивлерĕмĕр. Куллен çирĕпленсе пычĕ дисциплина. Йывăр вăхăтра пĕрне-пĕри пулăшса пычĕç.

**— Пĕр клуб çеç мĕнех тума пултарĕ? Çарпа патриотизм клубĕсем ытларах пулсан çеç усси курăнĕ. Çапла мар-и?**

— Кун пирки шутламан мар эпĕ. Икĕ çул каялла пирĕн клуб ĕçĕ-хĕлĕпе хулари воин-интернационалистсем, педагогсем интересленме пуçларĕç. Пирĕнтен вĕренсе, хăйсем пурăнакан вырăнсенче çарпа патриотизм клубĕсем уçма тытăнчĕç. Хальхи вăхăтра хулара вĕсен йышĕ вунпилĕкрен иртнĕ. Çакнашкал клубсем кашни шкулăн пулмалла. Шкулсем çуллахи вăхăтра ĕçлесех каймаççĕ пулсан, клубсен алăкĕсем вара июль — август уйăхĕсенче те уçă. Кăçал эпир клуба чылай пысăклатрăмăр, тĕрессипе халĕ вăл 350 ачана пĕрлештерекен пĕрлешÿ пулса тăчĕ. Унта Ленин районĕнчи ултă клуб кĕрет.

Пĕр ÿстермесĕрех, çул çитменнисен пысăк ушкăнĕ пушă вăхăта интереслĕ тата усăллă ирттерет. Вĕсем право йĕркине пăсна тĕслĕхсем пулман. Хулиганла ушкăнсенче çÿрекенсем çук. Сывлăх тата кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен пиçĕхсе ÿсеççĕ. Паллах, ун пеккисем Совет Çарне тивĕçлĕ пулаççĕ.

**— Эсир çар пирки сăмах хускатрăр-ха та. Юлашки вăхăтра вара ăна хирĕçлесе калаçакансем те тупăнкалаççĕ. Кун пирки мĕн каланă пулăттăр?**

— Ăна хирĕçле пуçласа янă калаçу сиен кÿрет кăна. Хăшпĕрисем вăл пачах кирлĕ мар, теççĕ. Урамсенче çеç мар, телевизорпа та çаплах калаçма пуçларĕç. Хаçат-журналта та çавăн пек пĕлтерешлĕ материалсем пичетленеççĕ. Мĕншĕн-ха капла? Вăрçă хăрушлăхĕ пĕтмен-çке. НАТОна кĕрекен çĕршывсем халĕ те вăрçа хатĕрленеççĕ. Тепĕр енчен илсен, шухăш-кăмăлĕпе çирĕпленсе çитмен ачасем çар çине чалăшла пăхма пуçлаççĕ. Çакăнтан пуçланать те вăл çар службипе каяс мар тесе пăркаланасси. 1979 çулта, Совет Çарĕн хăшпĕр чаçĕсене Афганистана кĕртсе, йăнăш тунă, тесе хак парĕç. Анчах уншăн революцие хÿтĕлесе пуç хунă тата аманнă совет салтакĕ айăплă мар-çке. Хамăрпа кÿршĕллĕ Афганистанра вăрçа хутшăннисем революцие хÿтĕлесе хăварма пулăшрĕç. Çакăнтан пархатарли мĕн пултăр! Эпĕ мирлĕ пурнăçшăн кĕрешекен афганецсене душмансем мĕнле асаплантарни, вĕсен çурчĕсене аркатни çинчен лайăх пĕлетĕп. Çавăнпа мана пархатарлă ĕç пĕлтерĕшне чакарма тăрăшни хытă тарăхтарать. Ман пек шутлакансем эпĕ çеç мар. Пирĕн çар чаçĕсем Афганистанра вăрçа хутшăнни пирки калаçнă чухне сÿлерех палăртнине шута илмесĕр тăмалла мар пулĕ.

**— Эсир — Чăваш АССРĕнчи преступлени тăвассине хирĕç кĕрешекен вăхăтлăх комитет членĕ. Комитет çул çитменнисем право йĕркине пăснипе çыхăннă ыйтусемпе ĕçлет-и?**

— Паллах. Нумаях пулмасть, акă, республикăра видеофильмсем кăтартас ĕçе тĕрĕслесе тăрас ыйтăва сÿтсе яврăмăр. Хальхи вăхăтра видеосалонсенче мĕнле фильмсем кăтартаççĕ-ха? Çак ыйту çине никам та йĕркеллĕ ответ параймасть. Эпĕ ыйтса пĕлнĕ тăрăх, ют çĕршывсенчен илсе килнĕ порнографи фильмĕсем, çапăçни, çын вĕлерни çинчен каласа паракан харушă фильмсем кăтартаççĕ ытларах вĕсенче. Çул çитменнисенчен хăшпĕрисем видеосалонсенчен тухаççĕ те е çапăçма, е хĕрачасене мăшкăлама тытăнаççĕ. Ахальтен каламастăп çак сăмахсене. Вĕсене тĕслĕхсемпе çирĕплетме пулать. Кунта йĕрке пулмаллах. Республикăра видеосалонсемпе видеозалсен репертуарĕсене çирĕплетекен пĕр комисси çеç пулмалла. Пирĕн пата илекен пур видеокассетăпа та ун «али» витĕр кăлармалла. Унсăрăн видеофильмсем кăтартас ĕçре ырă улшăну тăваймăн.

Шупашкарта право йĕркине пăсакан çамрăксене тĕрмерен ларса тухнисем ертсе пыни пирки пĕлетпĕр. Анчах вĕсем ачасене айккинчен «вĕскĕртсе» çеç тăраççĕ, тÿрремĕнех преступлени тума хăйсем хутшăнмаççĕ. Çакă вăл çул çитменнисем право йĕркине пăснине хирĕç кĕрешме пушшех йывăрлатать. Ку ыйтăва та пăхса тухрăмăр комитет ларăвĕнче...

**— Хальхи вăхăтра çарпа патриотизм клубĕсем мĕнле ĕçлеççĕ? Вĕсен йышне ÿстерме шутлатăр-и?**

— Клубсен алăкĕсем кашни ачашăн уçă. Вĕсене çĕршерĕн çÿреççĕ. Занятисене эпĕ хатĕрленĕ программăпа ирттереççĕ. Кама хăш клуб кăмăла каять, çавна суйласа илме пулать. Культурăпа спорт, техника клубĕсем, ытти йышши клубсем вуншарăн. Вĕсен йышне мĕн чухлĕ ÿстеретпĕр, çавăн чухлĕ лайăхрах. Ачасене пушă вăхăта усăллă ирттерме условисем туса памалла. Урoксем хыççăн урам тăрăх çапкаланса ан çÿреччĕр.

**— Юрий Борисович. Сирĕн çемье пысăк тенине илтнĕ.**

— Çапла, пĕр хваттерте саккăрăн пурăнатпăр: асанне, атте, анне, эпĕ, арăм, виçĕ ывăл. Виççĕшĕ те садика çÿреççĕ. Пушă вăхăта вĕсемпе ирттерме тăрăшатăп. Чăн та, вăл ытла сахал юлать.

**— Ÿссе пыракан ăрăва тивĕçлĕ воспитани парас ĕçре ăнăçусем тума сунатпăр. Çĕнĕ çул ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр Сире.**

— Тавах ырă сăмахăрсемшĕн. Шанăçа тÿрре кăларасчĕ.

Ю. МИХАЙЛОВ.

*Аслӑ Ҫӗнтерӳ 45 ҫул тултарнӑ май*

# ҪУР ӖМӖР— ҪАР СЛУЖБИНЧЕ

**ШАМАРШАРА ШКУЛ УҪАЛНАРАНПА 150 ҪУЛ ҪИТНИНЕ РАЙОНТА АНЛАН ПАЛЛА ТУРЕС. ЮБИЛЕЙ ЯЧЕПЕ ЙЕРКЕЛЕНЕ ТЕЛПУЛАВА ХАЙ ВАХАТЕНЧЕ ҪАК ШКУЛТАН ВЕРЕНСЕ ТУХНИСЕМ, ВЕСЕН УЧИТЕЛЕСЕМ ЙЫШЛАН ПУХАНЧЕС. ВАЛЕ КУ САЛТАВПА КИЛСЕ СИТЕЙМЕННИСЕМ ТАВ СЫРАВЕСЕМ, САЛАМЛА ТЕЛЕГРАММАСЕМ ЯНА. ЛЕНИНГРАДРАН ТА ТЕМИҪЕ ТЕЛЕГРАММА ИЛНЕ. ВЕСЕНЧЕН ПЕРНЕ ХАЛЕ ОТСТАВКАРИ ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ВАСИЛИЙ НИКОЛАЕВИЧ НИКИФОРОВ ЯНА.**

В. Н. Никифоров 1923 ҫулхи ноябрӗн 19-мӗшӗнче Шӑмӑршӑ ялӗнче хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ. Ашшӗпе амӑшӗ колхоза чи пирвайхисен шутӗнче, 1929 ҫулта кӗнӗ.

— Эпӗ ун чухне ачаччӗ, тен, пурне те лайӑххӑн ӑнланса илеймен те пулӗ, — аса илет Василий Николаевич. — Анчах ял ҫыннисенчен кашниех тӳрӗ кӑмӑлпа, вӑхӑта пӑхмасӑр, коллективлӑ хуҫалӑха тӗреклетессишӗн пӗтӗм вӑйне парса ӗҫленине лайӑх астӑватӑп. Атте мана та ирпе-ирех хире илсе тухатчӗ. Колхоз пурлӑхне пурте хӑйсен харпӑрлӑхӗ вырӑнне хурса хаклатчӗҫ. Мӗн пӗчӗкрен ӗҫе хӑнӑхни мана кайран пӗтӗм пурнӑҫ тӑршшӗпех питӗ кирлӗ пулчӗ, йывӑрлӑхсене ӑнӑҫлӑ ҫӗнтерсе пыма пулӑшрӗ.

Тӑван шкул коллективне, чи малтанах шкул директорне Степан Ильич Николаева, вырӑс чӗлхипе литературин учительницине Устинья Степановнӑна, математика учительне Михаил Иванович Калашникова, Иван Ефимович Петровпа Михаил Никифорович Никифорова, ытти учительсене вӑл паян кун та ырӑпа асӑнать. Учительсенчен кашниех ачасене тарӑн пӗлӳ парассишӗн, вӗсен тавракурӑмне анлӑлатассишӗн, Тӑван ҫӗршывӑн чӑн-чӑн патриочӗсем пулса ӳстерессишӗн ырми-канми тӑрӑшнӑ. Вӗренекенсем хушшинче хӑйне евӗр ӑмӑрту пынӑ: япӑх паллӑсем илсе, никамӑн та пите хӗретес килмен. Яшсенчен ытларахӑшӗ Хӗрлӗ Ҫар командирӗ пулма ӗмӗтленнӗ. «Летчик пулатӑп», — ҫакӑн пек тӗллев лартнӑ хӑйӗн умне Василий.

Сывлӑш-ҫар летчикӗ пулма ӳт-пӳ тӗлӗшӗнчен «пиҫсе» ҫитейменнине туйса, вӑл 1939 ҫулта, вӑтам шкул пӗтерсен, Куйбышеври плановӑ экономика институтне вӗренме кӗрет. Анчах икӗ уйӑхран ытла ҫӳреймест занятисене. Вӑрҫӑ тухас хӑрушлӑх пысӑк пулнине кура пулас, Оборона халӑх комиссарӗ ҫав ҫул вӑтам шкул пӗтернӗ яшсене пурне те ҫар службине илесси ҫинчен приказ кӑларнӑ. Повестка парасса кӗтмесӗр, Василий Никифоров хӑй ирӗкӗпе Хӗрлӗ Ҫар ретне ҫырӑнать. Ҫар училищине вӗренме кӗрес ӗмӗте пуҫран кӑлармасть.

Кӗҫӗн командирсен полк шкулӗнче пӗлӳ илнӗ хыҫҫӑн вӑл хӑйӗн служба тивӗҫне кавалерири разведкӑра пурнӑҫлама тытӑнать. 1941 ҫулхи июнь пуҫламӑшӗнче ӑна Киеври М. И. Калинин ячӗпе хисепленекен ҫар ҫыхӑну училищине вӗренме яраҫҫӗ. Вӗренме кӗмелли экзаменсене вӑл ку хутӗнче те ӑнӑҫлӑ тытать. Училище пӗтернӗ, пӗр вӑхӑт резервра пулнӑ хыҫҫӑн 1942 ҫулхи октябрьте вӑл — Центральнӑй фронтра. Ытти подразделенисемпе пӗрле, вӗсем танксен 2-мӗш армийӗ Курск пӗккинчи ҫапӑҫусене хатӗрленет, кайрахпа ҫав хӗрӳрен те хӗрӳ тытӑҫусене хутшӑнать.

Паллах, связист вӑл — танкист е мотострелок мар. Анчах ҫапӑҫу ӑнӑҫлӑхӗ вӗсенчен нумай килни пуриншӗн те паллӑ. Фашистсен авиацийӗ татти-сыпписӗр бомба тӑкатьи, снарядсем тӑтӑшах ҫурӑлаҫҫӗ-и, пульӑсем пуҫ ҫийӗн е юнашар шӑхӑрса иртеҫҫӗ-и — связистсен ҫыхӑнӑва пӗр тикӗс йӗркелесе тӑмалла.

Пӗррӗмӗш орденпа — Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе — В. Н. Никифорова Курск пӗккинчи ҫапӑҫусем вӑхӑтӗнче командованипе тытакан ҫыхӑнӑва шанчӑклӑ йӗркелеме пулӑшнӑшӑн наградӑлаҫҫӗ те. Ҫак орденах вӑл иккӗмӗш хутчен Корсунь-Шевченковски операцийӗ хастарлӑх кӑтартнӑшӑн илме тивӗҫ пулать. Ҫавӑн чухне ӗнтӗ вӑл ларса ӗҫлекен ҫар ҫыхӑнӑвӗн машинине икӗ «Мессершмидт» атакӑланине, вут хыптарса илнине Василий Николаевич хумханса аса илет. «Телее, чӗрӗ юлтӑм, — тет вӑл. — Пушара та ҫийӗнчех сӳнтерме май килчӗ». Ҫак эпизод ҫинчен арми хаҫатӗнче те ҫырса кӑтартнӑ пулнӑ.

1944 ҫулхи апрельте, вӑйлӑ ҫапӑҫусем пынӑ тапхӑрта, ӑна парти ретне йышӑнаҫҫӗ.

1-мӗш Белорусси фрончӗн составӗнче вӗсен армийӗ Германин тӗп йӑвине — Берлин хулине тытса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче палӑрать. Пирӗн ентеше ку хутӗнче иккӗмӗш степень Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗпе наградӑлаҫҫӗ.

Вӑрҫӑ шавӗ лӑпланнӑ хыҫҫӑн В. Н. Никифоров — рота командирӗ, арми штабӗн офицерӗ. Шанса панӑ пур должноҫсенче те хӑйӗн пуҫарулӑхӗпе, пултарулӑхӗпе, ӗҫе тӗплӗ пӗлнипе палӑрса тӑрать. 1950—1955 ҫулсенче С. М. Буденный ячӗпе хисепленекен ҫар ҫыхӑну академийӗнче вӗренет. Ӑна пӗтернӗ хыҫҫӑн вунпӗр ҫул Совет Ҫарӗн ҫыхӑну чаҫӗсенче ответлӑ должноҫсене йышӑнать. Кайрахпа вӑл — Полтаври аслӑ ҫар училищин начальникӗн заместителӗ.

1971 ҫулта В. Н. Никифорова Томскри командӑй аслӑ ҫар ҫыхӑну училищин начальникӗ пулма уйӑрса лартаҫҫӗ. Ҫак вӗренӳ заведенине ертсе пынӑ ҫулсене Василий Николаевич хӑйӗншӗн уйрӑмах ответлӑ тапхӑр тесе шутлать. Ҫакна ӑнланма пулать: пулас командир-воспитательсене, ҫар инженерӗсене вӗрентсе хатӗрлесси — ҫӑмӑл ӗҫ мар. Аслӑ ҫар училищи ятне тин кӑна-ха панӑ май, коллектива пӗтӗҫтерес, преподавательсен методика тӗлӗшӗнчи ӑсталӑхне ӳстерес, вӗренӳпе пурлӑх никӗсне ҫирӗплетес енӗпе те ҫине тӑрса ӗҫлет. Ҫак ҫӑмӑл мар вӑхӑтра вӑл Томскри институтсен ректорӗсен пулӑшӑвне лайӑх туйнӑ, хӑй те хулари аслӑ вӗренӳ заведенийӗсен ректорӗсен совечӗн членӗнче тӑнӑ.

Томскри училищӗре ҫав ҫулсенче пирӗн республикӑри, ҫав шутра Шӑмӑршӑри вӑтам шкула пӗтерсе пынӑ ҫамрӑксем те йышлӑн вӗреннӗ. Кайрахпа вӗсенчен хӑшӗсем ҫар ҫыхӑну академийӗнче пӗлӗве ӳстернӗ, наука кандидачӗсем пулса тӑнӑ. Афганистанра интернационаллӑ тивӗҫе пурнӑҫланисем те пур.

1979 ҫул вӗҫӗнче В. Н. Никифоров генерал-майора Ленинградри С. М. Буденный ячӗпе хисепленекен ҫар ҫыхӑну академийӗн факультечӗн начальникӗ пулма ҫирӗплетеҫҫӗ, ку должноҫра вӑл 1987 ҫулхи декабрьччен ӗҫлет. 1988 ҫулхи январьте запаса тухать. Апла пулин те, юратнӑ ӗҫрен уйрӑлмасть, паян кун та академире преподавательте ӗҫлет.

В. Н. Никифоров общество ӗҫӗнчи хастарлӑхӗпе те палӑрса тӑрать. Вӑл Белоруссири компартин XXIV съездӗн делегачӗ пулнӑ, виҫӗ хутчен ӑна КПСС Томск обкомӗн членне, тӑватӑ хутчен халӑх депутачӗсен Томск область Совечӗн депутатне, Ленинград хулинчи район Совечӗн депутатне суйланӑ. Ҫар училищин начальникӗ пулнӑ ҫулсенче облаҫри «Зарница» тата «Орленок» ҫарпа спорт вӑййисене ертсе пынӑ. Ҫамрӑксене ҫар патриотизмӗ майлӑ воспитани парас енӗпе вӑл халӗ те нумай ӗҫлет.

Мирлӗ вӑхӑтра служба тивӗҫне чыслӑн пурнӑҫласа пынӑшӑн, Совет Ҫарӗ валли кадрсем хатӗрлес енӗпе ӑнӑҫлӑ ӗҫленӗшӗн ӑна Хӗрлӗ Ялав, пӗррӗмӗш степень Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗсемпе, виҫҫӗмӗш степень «СССР Хӗҫпӑшаллӑ Вӑйӗсенче Тӑван ҫӗршыв службинче тӑнӑшӑн» орденпа, медальсемпе, нумай хутчен Хисеп грамотисемпе наградӑланӑ. Ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн ҫар званине ӑна 1974 ҫулхи май уйӑхӗнче панӑ.

Никифоровсен икӗ ачи те аслӑ пӗлӳ илнӗ. Ывӑлӗ — наука кандидачӗ, хальхи вӑхӑтра парти ӗҫӗнче. Хӗрӗ — физик, наука тӗпчев институчӗн сотрудникӗ.

Василий Никифорович ентешӗсемпе, хӑй вӗреннӗ шкул коллективӗпе тачӑ ҫыхӑну тытать, отпуск вӑхӑтӗнче тӑван республикӑна килсе кайма тӑрӑшать.

— Шупашкарта иртнӗ ҫулхи августра пулма тӳр килчӗ, — ҫырать вӑл Ленинградран. — Хула мана питӗ килешрӗ. Ҫуралса ӳснӗ вырӑнсене каҫал та ҫитсе курасшӑн-ха. Вӗсем маншӑн ҫав тери хаклӑ.

**В. СТЕПАНОВ.**



*Ӳкерчӗксем ҫинче:* отставкари генерал-майор В. Н. Никифоров; тактикӑлла занятисем умӗн.

## УРӐХ ҪӖРШЫВСЕНЧЕ

### Коммунистсене чӗнсе каланӑ

ПЕКИН. (ТАСС). Китайри коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн Политбюровӗн Яланхи комитечӗн членӗ, Центральнӑй Комитетӑн организациллӗ пайӗн заведующийӗ Сун Пин Китайри мӗнпур коммунистсене Китайри компартие рабочи класс авангарчӗ туса хума чӗнсе каланӑ. Партин ҫирӗпленсе, вӑйланса ҫитмелле, пӗтӗҫӳллӗ пулмалла, кӗрешме пултармалла, тенӗ вӑл. Сун Пин парти строительствин теорийӗн ыйтӑвӗсемпе ӗҫлекен тӗпчев ушкӑнӗн ларӑвӗнче сӑмах каланӑ. Лару пӗр уйӑха яхӑн пынӑ.

Сун Пин парти строительствин марксизм-ленинизм положенийӗсемпе Мао Цзэдун идейисем ҫинче никӗсленсе таракан принципӗсене хӳтӗлеме кирлине, парти обществӑра ертсе пыракан вӑй пулни рабочи класшӑн пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнине, парти руководствине вӑйлатма тата лайӑхлатма кирлине уйрӑмах палӑртнӑ.

«Экономика строительствинче пирӗн централизацие сыхласа хӑвармалла, тӑватӑ тӗп принципа, реформӑсен политикине ҫирӗп тытса пымалла тата тулашри тӗнчешӗн алӑксене уҫӑ тытмалла. Ҫакӑнпа пӗрлех пирӗн Китай аталанӑвне мирлӗ майпа чарса лартма хӑтланакансенчен сыхӑ пулмалла», —тенӗ Сун Пин.

### Каллех демонстрацисем ирттернӗ

БЕРЛИН, январӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Ҫӗнӗ ҫул уявӗ хыҫҫӑн Демократиллӗ Германи Республикинчи нумай хуласен площачӗсемпе урамӗсенче каллех массӑллӑ демонстрацисем пулса иртнӗ. Лейпцигра, Галлере, Гер хулинче, Карл-Марксштадтра, Котбусра, Магдебургра, Нойбранденбургра, Одер ҫинчи Франкфуртра, Шверинра тата ытти хуласенче ҫав демонстрацисене пӗтӗмпе 200 пин ҫын ытла хутшӑннӑ.

«Оппозици юхӑмӗн столицинче» — Лейпцигра чиркӳсенче кӗлӗсем вӗҫленнӗ хыҫҫӑн 100 пин ҫынна яхӑн урамсене тухнӑ. Хулан тӗп площадӗнче опера театрӗ умӗнче ирттернӗ демонстраци вӑхӑтӗнче халӑх хушшинче листовкӑсем салатнӑ. Нумай партисемпе организацисен представителӗсем хӑйсен политикӑллӑ позицине пропагандӑланӑ.

«Социализмла экспериментсем ирттерсе ҫитет!», «Сулахайри тата сылтамри радикалсене хирӗҫ — ирӗклӗ суйлавсем!» тесе кӑшкӑракансем пулнӑ демонстрантсем хушшинче. Халӑх вӗсене хирӗҫ ҫапла ответленӗ: «Германи — пӗрлӗхлӗ тӑван ҫӗршыв!», «Модров— сирӗл!», «Гизи — сирӗл!», «СЕПГ пӗтрӗ!» Ҫынсем икӗ ҫӗршыва пӗрлештересси ҫинчен юрӑсем юрланӑ. Опера театрӗ умӗнчи площадьре неофашистсен «республиканецсен» партийӗ майлисем те пулнӑ. Вӗсен транспарантӗсем ҫине ҫапла ҫырса хунӑ: «Халех пӗрлешмелле! Хӗвелтухӑҫӗнче тата хӗвеланӑҫӗнче пӗтӗм халӑх референдумне ирттермелле!»

### Афганистанри лару-тӑру

КАБУЛ, январӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Афганистан столицинче партисемпе общественнӑлла-политикӑлла организацисен руководителӗсен канашлӑвне ирттернӗ. Канашлура Афганистан Республикин президенчӗ Наджибулла сӑмах каланӑ. Афганистанра ҫӗнӗрен мир туса хумашкӑн прогрессивлӑ тата патриотлӑ мӗнпур вӑйсене малалла пӗрлештермелле, тенӗ вӑл. Канашлура ҫураҫу политикине пурнӑҫа кӗртмешкӗн Афганистанӑн Наци фрончӗн пӗлтерӗшне ӳстерме кирлине палӑртнӑ.

Иртнӗ тӑватӑ талӑк хушшинче правительство ҫарӗсем Нангархар, Пактия, Кандагар тата Гильменд провинцийӗсенче оппозици отрячӗсем вырнаҫнӑ районсене вӑйлӑн тапаннӑ. Ҫапӑҫусенче тӑшманӑн 200 ҫын ытла вилнӗ тата аманнӑ. Пӑлхавҫӑсен боеприпассем тытакан тӑватӑ складне тата пилӗк автомашинине пӗтернӗ.

### Апат-ҫимӗҫ ҫитмест

ВАРШАВА, январӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Варшавари тата Польшӑри ытти хуласенчи аш-какай магазинӗсенче ҫӗнӗ ҫулӑн пирвайхи ҫак кунӗсенче ҫӳлӗксем пуш-пушах. Ҫынсем продукци илсе пырасса кӗтсе черетре тӑраҫҫӗ. Аш-какай пур ҫӗрте хаксем хӑпараҫҫӗ: иртнӗ ҫул вӗҫӗнчипе танлаштарсан, ене ашӗн килограмӗ 2—2,5 хут ӳснӗ. Калбассемпе ытти хаксем кунтан-кун ӳсе пыраҫҫӗ, тесе ҫырать паян «Жиче Варшавы» хаҫат. Ҫӗршывӑн нумай районӗсенче аш-какай комбиначӗсенче ӗҫ чарӑнса ларнӑ. Ҫӗнӗ ҫулта государство майракалла шултра выльӑхпа сысна сутӑн илмелли хакӗсем чылай ӳснӗ пулин те, аш-какай комбиначӗсене выльӑх пымасть. Хресченсем хӑйсен выльӑх-чӗрлӗхне сутма тахта-

### Никама та чару ҫук

БУХАРЕСТ, январӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Румыни ирӗклӗ телевиденийӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Наци ҫӑлакан фронт совечӗ паспорт режимӗ ҫинчен тата урӑх ҫӗршывсене кайса ҫӳресси ҫинчен декрет кӑларнӑ.

Ҫав документпа килӗшӳллӗн Румыни гражданӗсен, вӗсем хӑш наци представителӗ, политика тӗлӗшӗнчен мӗнле шухӑшлӑ пулнине тата мӗнле профессипе ӗҫленине пӑхмасӑр, урӑх ҫӗршывсене ирӗклӗн кайса ҫӳреме право пур. Румыни кашни гражданинӗ урӑх ҫӗршывсене каймалли паспорт илме пултарать. Румынирен урӑх ҫӗршывсене тухса каймалли тата Румыние пымалли визӑсене пӑрахӑҫлаҫҫӗ. Граждансене вӗсем заявлени панӑ хыҫҫӑн 20 кунтан кая юлмасӑр паспорт параҫҫӗ. Урӑх ҫӗршыва ялан пурӑнмашкӑн тухса кайма шут тытнӑ граждансене вӗсем заявлени панӑ хыҫҫӑн виҫӗ уйӑхран кая юлмасӑр ответ параҫҫӗ.

### Ҫӗнӗлле йӗркелеҫҫӗ

НЬЮ-ЙОРК, январӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). СШАн Аэронавтикӑпа тӗнче уҫлӑхне тӗпчес енӗпе ӗҫлекен наци управленине ҫӗнӗлле йӗркелеҫҫӗ. СШАн аэрокосмос промышленноҫӗн «Авиэйшн уик энд спейс текнолоджи» журналӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, НАСА руководстви икӗ управление — аэронавтикӑ тата космос технологийӗ енӗпе ӗҫлекен управленипе этем Хӗвел системине тӗпчес енӗпе ӗҫлекен управление пӗрлештерме йышӑннӑ. Журнал пӗлтернӗ тӑрӑх, НАСАн ҫӗнӗ пысӑк подразделенине Арнольд Алдрич ертсе пыма пуҫлать. Нумаях пулмасть ӑна аэронавтикӑпа космос технологийӗ енӗпе ӗҫлекен управлени начальникӗ пулма уйӑрса лартнӑ.

### Камерун чейӗ

ЯУНДЕ. (ТАСС). Европӑри тата Америкӑри рынoксенче Камерун чейне пысӑка хурса хаклама пуҫланӑ. 1989 ҫулта ҫак ҫӗршыв ытти государствӑсене 2.462 тонна чей сутнӑ. Ҫакӑн ҫинчен Камеруна аталантарас енӗпе ӗҫлекен корпорацин генеральнӑй директорӗ П. М. Мусонге пресс-конференцире пӗлтернӗ. Камерунра, уйӑрамах ҫӗршывӑн хӗвеланӑҫ пайӗнче, чей ӗлӗк авалтанпах туса илеҫҫӗ. Ӑна ку ҫӗршывра Англии колони компанийӗсем ҫитӗнтерме пуҫланӑ. Чей плантацийӗсем тӗпрен илсен Камерун вулканӗн айккисенче тата тинӗс шайӗнчен 2000 метра яхӑн ҫӳлӗрехри сӑртлӑ-туллӑ районсенче вырнаҫнӑ. Чей ҫулҫине типӗтме Камерунра эвкалипт ҫунтараҫҫӗ.

### Наркотиксене хирӗҫ

АНКАРА. (ТАСС). Турци-

Яшсенчен ытларахăшĕ Хĕрлĕ чах çапăçу [illegible]



лă вĕренÿ заведенийĕсен ректорĕсен совечĕн членĕнче тăвă.

Томскри училищĕре çав çулсенче пирĕн республикăри, çав шутра Шăмăршăри вăтам шкула пĕтерсе пынă çамрăксем те йышлăн вĕреннĕ. Каярахпа вĕсенчен хăшĕсем çар çыхăну академийĕнче пĕлĕве ÿстернĕ, наука кандидачĕсем пулса тăнă. Афганистанра интернационалла тивĕçе пурнăçланисем те пур.

1979 çул вĕçĕнче В. Н. Никифоров генерал-майора Ленинградри С. М. Буденный ячĕпе хисепленекен çар çыхăну академийĕн факультечĕн начальникĕ пулма çирĕплетеççĕ, ку должноçра вăл 1987 çулхи декабрьччен ĕçлет. 1988 çулхи январьте запаса тухать. Апла пулин те, юратнă ĕçрен уйрăлмасть, паян кун та академире преподавательте ĕçлет.

В. Н. Никифоров общество ĕçĕнчи хастарлăхĕпе те палăрса тăрать. Вăл Белоруссири наградăланă. Çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн çар званине ăна 1974 çулхи май уйăхĕнче панă.

Никифоровсен икĕ ачи те аслă пĕлÿ илнĕ. Ывăлĕ — наука кандидачĕ, хальхи вăхăтра парти ĕçĕнче. Хĕрĕ — физик, наука тĕпчев институчĕн сотрудникĕ.

Василий Никифорович ентешĕсемпе, хăй вĕреннĕ шкул коллективĕпе тача çыхăну тытать, отпуск вăхăтĕнче тăван республикăна килсе кайма тăрăшать.

— Шупашкарта иртнĕ çулхи августра пулма тÿр килчĕ, — çырать вăл Ленинградран. — Хула мана питĕ килĕшрĕ. Çуралса ÿснĕ вырăнсене кăçал та çитсе курасшăн-ха. Вĕсем маншăн çав тери хаклă.

В. СТЕПАНОВ.

*Ÿкерчĕксем çинче:* отставкăри генерал-майор В. Н. Никифоров; тактикăлла занятисем умĕн.

---

(ТАСС). Афганистан столицинче партисемпе общественно-политикăлла организацисен руководителĕсен канашлăвне иртнĕ, Канашлура Афганистан Республикин президенчĕ Наджибулла сăмах каланă. Афганистанра çĕнерен мир туса хумашкăн прогрессивлă тата патриотла мĕнпур вăйсене малалла пĕрлештермелле, тенĕ вăл. Канашлура çураçу политикине пурнăçа кĕртмешкĕн Афганисне ÿстерме кирлине палартнă.

Иртнĕ тăватă талăк хушшинче правительство çарĕсем Нангархар, Пактия, Кандагар тата Гильменд провинцийĕсенче оппозици отрячĕсем вырнаçнă районсене вăйлăн тапăннă. Çапăçусенче тăшманăн 200 çын ытла вилнĕ тата аманнă. Пăлхавçăсен боеприпассем тытакан тăватă складне тата вилĕк автомашинине петернĕ.

---

## Камерун чейĕ

ЯУНДЕ. (ТАСС). Европăра тата Америкăри рынокĕсенче Камерун чейне пысăка хурса хаклама пуçланă. 1989 çулта çак çĕршыв ытти государствăсене 2.462 тонна чей сутнă. Çакăн çинчен Камеруна аталантарас енĕпе ĕçлекен корпорацин генеральнăй директорĕ П. М. Мусонге пресс-конференцире пĕлтернĕ. Камерунра, [illegible] пĕнче, чей ĕлĕк-авалтанпах туса илеççĕ. Ăна ку çĕршывра Англин колони компанийĕсем çитĕнтерме пуçланă. Чей плантацийĕсем тĕпрен илсен Камерун вулканĕн айккисенче тата тинĕс шайĕнчен 2000 метра яхăн çÿлерехри сăртла-тулла районсенче вырнаçнă. Чей çулçине типĕтме Камерунра эвкалипт çунтараççĕ.

## Апат-çимĕç çитмест

ВАРШАВА, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Варшаври тата Польшăри ытти хуласенчи аш-какай магазинĕсенче çĕнĕ çулăн пирвайхи çак кунĕсенче çÿлĕксем пуш-пушах. Çынсем продукци илсе пырасса кĕтсе черетре тăраççĕ. Аш-какай пур çĕрте хаксем хăпараççĕ: иртнĕ çул вĕçĕнчипе танлаштарсан, ене ашĕн килограмĕ 2—2,5 хут ÿснĕ. Кăлпассипе ытти аш-какай продукчĕсен, сĕт продукчĕсен, çăкăр, сахăр хакĕсем те унччинхинчен чылай пысăкрах. Хаксем ырăн мĕнле пулассине никам та пĕлмест, мĕншĕн тесен апат-çимĕç продукчĕсемпе чи кирлĕ таварсен хакĕсем кунтан-куна ÿссе пыраççĕ, тесе çырать паян «Жиче Варшавы» хаçат. Çĕршывăн нумай районĕсенче аш-какай комбиначĕсенче ĕç чарăнса ларнă. Çĕнĕ çулта государство майракалла шултра выльăхпа сысна сутăн илмелли хаксем чылай ÿснĕ пулин те, аш-какай комбиначĕсене выльăх памасть. Хресченсем хăйсен выльăх-чĕрлĕхне сутма тăхтаса тăраççĕ. Ялхуçалăх техникин, запас пайсен, химикатсен тата питĕ кирлĕ ытти таварсен хакĕсем пĕрмай ÿссе пыни вĕсене хăйсен продукцийĕн хакĕсемпе улталанасран хăратать.

## Тĕрĕс мар ăнланаççĕ

САН-ФРАНЦИСКО, январĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕвеланăçĕнчи массăллă информаци органĕсем СССР Союзĕнче тата Хĕвелтухăç Европăри çĕршывсенче пулса иртекен кăткăс улшăнусем çинчен тĕрĕс мар ăнлантарса пама хăтланаççĕ. Çав улшăнусене вĕсем «марксизм сухату тÿсни» пулнă пек кăтартма тăрăшаççĕ, «пĕртен-пĕр тĕрĕс çул-йĕр — капитализмла аталану çул-йĕрĕ», тесе ĕнентереççĕ. Кун пирки Америкăри чи паллă историк-ученăйсенчен пĕри, Калифорни университетĕнче ĕçлекен Герберт Аптекер хăйĕн шухăшне пĕлтернĕ.

«Массăллă информаци органĕсенчен нумайăшĕ коммунизм пĕтрĕ, тесе ĕнентерни — ухмахла сăмах, — тенĕ вăл. — Коммунизмăн тĕп тĕллевĕ — мĕнпур çынсем пĕр тан правăсемпе усă куракан, чăннипех демократилле тĕреслĕх обществи туса хурасси. Çавăнпа та коммунизм тавас идея вăл — вилĕмсĕр». Халĕ пуçланнă çĕнетÿ тĕллевĕ те çавах, тет ученăй. Çĕнетÿ вăл коммунизмран пăрăнни мар, пачах урăхла, вăл тĕнчери наукăра тата технологире çав тери пысăк революцисем пулса иртнине шута илсе, ĕç тухăçлăхне ÿстерме, хастарлăха вăйлатма, çыхăнусене тата пултарулăха аталантарма майсем туса парса, обществăна тасатать тата çĕнĕлле йĕркелет.

## Наркотиксене хирĕç

АНКАРА. (ТАСС). Турцири полици Голландие ăсатмалла столовăй гарнитурĕнче героин нумай тупнă. Çĕнĕ çулăн пирвайхи кунĕсенче полици Турцирен Европăн хĕвеланăç çыранне наркотиксем ăсатнине контроллесе тăракан контрабандистсен ушкăнне тытнă. Вырăнти хаçатсемпе журналсенче наркотиксемпе сутă тунине хирĕç кĕрешÿ мĕнле пынни çинчен час-часах çыраççĕ. Çĕршывăн хăрушсăрлăх управленийĕн генеральнăй директорĕ Сабахаттин Чакмак-оглу УБА информаци агентствин корреспондентне Турци наркобизнеса хирĕç кĕрешме çирĕп шухăш тытни çинчен пĕлтернĕ. Пĕлтĕр Турцири полици контрабандистсенчен ултă тоннăна яхăн наркотиксем туртса илнĕ. Ытти государствăсен хăрушсăрлăх органĕсемпе килĕштерсе ĕçлесе, полици çĕршыв тулашĕнче наркотиксемпе сутă тунă 1.200 ытла туркăна тытса хупнă. Турци контрабандисчĕсем уйрăмах активлă ĕçлекен çĕршывсенче Турцин хăрушсăрлăх управленийĕн представительствисене уçнă.

---

# ÇЕМЬЕРИ ЫРĂ ЙĂЛА

«Ноябрĕн 7-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, Мăн Шетмĕ клубĕнче, салтака каякансене халаллаcа, саванăçлă тĕлпулу ирттереççĕ», — пĕлтерчĕç вырăнти радиоузелпа. Çиччĕ мар, таххăр та çитрĕ. Клубра никам та куранмарĕ. Ăçта-ха çамрăксем, комсомолпа профсоюз тата дирекци представителĕсем?» Çак çырăва район хаçачĕн ноябрĕн 21-мĕшĕнче тухнă номерĕнче вуларăм.

Яшсене Тăван çĕршыва сыхлама саванăçлă лару-тăрура ăсатасси пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç тесе шутлатăп. Ялтан тухса кайиччен вĕсене пĕтĕм халăхпа чысламалла. Асăнмалăх парне пама манмалла мар. Кашниех çарта хăй хăш ял ачи пулнине, ашшĕ-амăшĕн пилне асра тыттăр.

Шел те, Красноармейски районĕнчи çарĕç комиссариатĕнче ĕçлекенсем шкулсенче, ялсенче сахал пулаççĕ, ят тухнисен ашшĕ-амăшĕпе сайра тĕл пулаççĕ. Çар тата патриотизм темипе райхаçатра çырманпа пĕрех, вырăнти радиовещанипе тухса калаçнине те илтме çук.

Ноябрĕн 18-мĕшĕнче çĕршывра артиллеристсемпе ракетчиксен кунне паллă турĕç. Райхаçатра вара кун пирки пĕр сăмах та пулмарĕ. Тинĕс-Çар Флочĕн кунне ячĕпе те нимех те калармарĕç. 1941—45 çулсенче пурнăçне шеллемесĕр çапăçнă моряксен чĕрисем таппа чарăнман-ха. Вăрçă хыççăн карапсем çинче çĕршыв чиккисене сыхланисем ялсенче вуншарăн. Çар чаçĕсенчи офицерсен статйисене мĕншĕн пичетлес мар? Çарĕç комиссариатĕнче ĕçлекенсен çарпа флот пурнăçĕпе мĕншĕн паллаштармалла мар?

Эпĕ Çурçĕр Тинĕс-Çар флотĕнче службăра пулнă. Матрос пурнăçне лайăх пĕлетĕп. Тÿрех калас пулать, çăмăл мар вăл. Аслă ывăлăм Лăпкă океанра службăра пулчĕ. Кĕçĕнни Хура Тинĕс-Çар флотне лекрĕ. Халĕ — Балтика флочĕн боцманĕ. Мăшăрпа иксĕмĕр кăштах мухтанатпăр та ывăлăмсемшĕн. Вĕсене нумай пăхнă. Тăван çĕршыва, çара юрăхла çын турăмăр, унта чысласа ăсатрăмăр. Ман атте иртнĕ вăрçăра Ржев патĕнче пуç хунă. Шутлатăп та, семьене пархатарлă йăла — Тăван çĕршыва сыхласси çирĕп кĕрсе вырнаçнине туйса илетĕп.

К. ШАЧКИН.

Красноармейски районĕ,
Именкасси ялĕ.

## ВĔРЕНÿРЕ ПУЛĂШАТЬ

Вăрнар районĕнчи Упнерти тулли мар вăтам шкулта ачасене пур енлĕн аталантарас, вĕсен тавракурăмне анлăлатас тĕлĕшпе нумай ĕçлеççĕ. Кунта Вăрнарти музыка шкулĕн филиалне уçни ачасемшĕн пысăк савăнăç пулчĕ.

Шкулти художество пултарулăх коллективĕ 1982 çултанпа концертсемпе ăçта-ăçта çитмерĕ пулĕ! Куракансене оркестр репертуарĕнчи чăваш халăх юрри-ташши уйрăмах кăмăла каять. Нумай пулмасть, тĕрлĕ жанр ăстисене пĕрлештерсе, «Пултарулăх ушкăнĕ» йĕркелерĕмĕр.

Шкулта ашшĕ-амăшĕсен пухăвне ирттернĕ чухне яланах чи малтан ачасене сăмах параççĕ, вĕсен концерчĕ пурне те савăнтарать. Кашнин ашшĕ е амăшĕ хăйĕн ачине шкулта мĕне вĕрентнине, пурнăç çулĕ çине кăларас ĕçре мĕнле майсемпе усă курнине кунта хăй куçĕпе курать.

**В. МИХАЙЛОВ,**
**художество пултарулăх руководителĕ.**

# ТУСЛĂХ ÇУЛĔПЕ

Теччĕри педагогика училищинче «Вĕрентекенсене интернационалла воспитани парасси» темăпа парти организацийĕн уçă пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта, пазихи ĕçсене тишкернипе пĕрлех, мероприятисен малашлăх планне çирĕплетрĕç.

Педучилищĕре ытларах вырăссем (пĕтĕм вĕренекенсен 37 проценчĕ), чăвашсем (36 процент) тата тутарсем (22 процент) пулнипе шута илсе, çак виçĕ чĕлхепе уйăхне пĕрре стена хаçачĕ кăларма, «Тăван халăхăн историйĕпе культури» темăпа лекцисем вулама, Шупашкар, Хусан тата Ульяновск хулисене экскурсисем йĕркелеме палăртнă. Пухăва хутшăннă преподавательсемпе вĕренекенсем, пĕр шухăшлă пулса, училищĕпе Çеçпĕл Мишши ятне парасшăн сасăланă.

Калас пулать, çак плана пурнăçа кĕртме тытăннă ĕнтĕ. Çеçпĕл юбилейне паллă тунă чух кунта Канашри педагогика училищинче вĕренекенсем тата Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕсем хăнара пулнă, вĕсемпе тусла çыхăнăва малалла тăсма калаçса татăлнă.

Декабрь пуçламăшĕнче училищĕре поэзипе фольклор эрни иртрĕ. Тĕрлĕ чĕлхепе кăларнă стена хаçачĕсем, викторинăсем, кĕнеке выставкисем пурин кăмăлне те кайрĕç. Концерт каçĕ вара кашнин чĕрине хускатрĕ: сцена çинчен тăватă чĕлхепе — вырăсла, чăвашла, тутарла, ирçелле — юрăсем шăранчĕç, сăвăсем янăрарĕç. Куракансене «Сăлкуç» чăваш фольклор ансамблĕн пултарулăхĕ уйрăмах кăмăла кайрĕ. Ăна педучилище общежитийĕсен воспитателĕ Елена Владимировна Тунгулова йĕркеленĕ.

**О. КУЛЬЕВ,**
**педучилище преподавателĕ. «Коммунизм ялавĕн» штатра тăман корреспонденчĕ.**

---

**«КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ» ОТВЕТЛЕÇÇĔ**

# «Кирлĕ-и Çĕмĕрлере стройтрест?»

**Çак ятпа пичетленнĕ статьяра [«Коммунизм ялавĕ», октябрĕн 14-мĕшĕ] Çĕмĕрле хулинче тата ун çывăхĕнче строительство ĕçĕсем анлăн саралнă май хăватлă организаци туса хурас ыйтăва хускатнă.**

«Статья питĕ тĕрĕс. 8-мĕш стройуправленин промышленность базине хута ярсан, Çĕмĕрлере трест йĕркелеме майсем пур, — пĕлтерет КПСС Çĕмĕрле хула комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ А. Козлов.

— Хулари партипе хуçалăх активĕн пухăвĕ те, ку ыйтăва 1989 çулхи октябрĕн 26-мĕшĕнче сÿтсе явса, «Чувашстрой» пĕрлешÿрен трест туса хумашкăн ыйтса решени йышăнчĕ».

КПСС Хĕрлĕ Чутай райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ В. Петьков хăйĕн çырăвĕнче çакна палăртать: «Республикăн хĕвеланăç енчи районĕсенче хăватлă строительство организацийĕ туса хума тахçанах вăхăт çитнĕ. Çакă вăл ялсен сăн-сăпатне çĕнетме, Апат-çимĕç программине пурнăçлас ĕçе хăвăртлатма пулăшĕччĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи заказчиксем треста 1990 çулта 1.350 пин тенкĕлĕх, 1991—1995 çулсенче — 14,5 миллион тенкĕлĕх çурт-йĕр ларттарма пултараççĕ».

Чăваш АССР Госпланĕн председателĕн заместителĕ А. Харлакевич редакцие ярса панă ответра вара шухăш уçăмлах мар. «Статьяра хускатнă ыйту питĕ вырăнлă пек: Çĕмĕрлере трест туса хуни пĕчĕк хулана аталантарма, ялсенче строительство калăпăшне ÿстерме май парать, — тет вăл. — Анчах ыйтăва пур енчен те никĕслесе панă теме çук. 8-мĕш стройуправлени юлашки çулсенче ĕçсен калăпăшне чылай пысăклатнă, анчах трест валли ĕçсем çителĕклĕ мар. Кунпа пĕр вăхăтрах Çĕмĕрлепе Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи подряд организацийĕн хăвачĕсемпе те кирлĕ пек усă курмаççĕ, вĕсене малалла аталантарас енĕпе тăрăшни çитмест».

---

*Ырана хăвармасăр татса памалли ыйту*

# МУЗЕЙĂН ВĂРĂМА ТĂСĂЛНĂ ИСТОРИЙĔ

Хула историйĕн музейĕ валли Çĕнĕ Шупашкарта ултă çул каяллах ятарлă çурт туса лартнăччĕ. Çав вăхăтранпа кунта виçĕ директор улшăнчĕ пулин те, музее çав-çавах хута яраймарĕç.

— Ман умĕн икĕ арçын-директор ĕçлесе пăхнă кунта, сĕтел-пукан илсе лартнă, чÿречесем çине решеткесем тутарнă. Анчах, çурт тăррине йĕркеллĕ туса хăварманнине пула, çумăр шывĕ кайса кирпĕч стенасем йĕпенсе ишĕлме пуçланă, юман паркет сарнă урай çĕрсе юрăхсăра тухнă,— каласа парать музейăн хальхи директорĕ С. Н. Винокурова.

Светлана Ивановна ĕçе йышăнсан, малтанах экспонатсемпе пухăнни пирки интересленме пуçланă. Вырăнти ватăсемпе курса калаçнă, вĕсен асаилĕвĕсене çырса илнĕ, документсем пухнă, предприятисемпе организацисене хăйсен экспоначĕсене пухса пама сĕннĕ. Шел, чылайăшĕ ку ĕçрен пăрăннă, пулăшу паман. Вара директор хулари «Путь к коммунизму» хаçатра заметка пичетлет. Унта авалхи Ăлмикасси тата Шуркасси вулăсĕсен историйĕпе паллаштарать, экспонатсем тăратма васкаман предприяти руководителĕсемпе парторганизаци секретарĕсене критиклет, хулара пурăнакансемпе шкул ачисене çак ĕçе хутшăнма чĕнсе калать. Музей çуртне юсама та пулăшу кирлĕ пулнă. Ку заметка 1987 çулхи июнĕн 4-мĕшĕнче пичетленнĕ.

Партин хула комитечĕн ун чухнехи пĕрремĕш секретарĕ А. И. Андрианов пулăшнипе, ответлă çынсене музей çуртне чĕнсе илме май килнĕ пĕррехинче. Çивĕч калаçу пулса иртессе шаннă директор. Анчах çак музейри тĕлпулу пуçланиччен ăна партин хула комитечĕн иккĕмĕш секретарĕ Н. Н. Мурыгина хăтăрса илнĕ. Мĕншĕн тетĕр-и? Тĕлпулăва хаçат корреспондентне чĕннĕшĕн.

Икĕ çул хушшинче епле тертленни çинчен, вырăнти руководительсенчен кам епле «тăрăшни» çинчен кăмăлсăрран аса илет вăл. Ответлă руководительсенчен пĕри — хула Совет ĕçтăвкомĕн культура пайĕн заведующийĕ Борис Григорьевич Романов. Ун кабинетне пайтах кĕрсе йăлăнма тивнĕ пулăшу ыйтса. Акă вăл юлашкинчен панă ответ: «Чăннипех каласан, манăн музей ыйтăвĕпе ĕçлеме вăхăт та, кăмăл та пулман».

Культура ыйтăвĕпе ĕçлекен тепĕр ответлă çын — партин хула комитечĕн инструкторĕ Владимир Петрович Матвеев. Вăл, пулăшас вырăнне, хула хаçатĕнче июньте тухнă заметка авторне Светлана Ивановна Винокуровăна хăй патне чĕнтернĕ, ятлама пуçланă: «Мĕншĕн эсир, ответлăха туймасăр, пирĕнпе калаçса таталмасăр, çак критикăллă заметкăна хаçатра пичетленĕ-ха? Мĕншĕн пÿртри çÿп-çапа таçта айккине кăлармалла?» Пулăшу илес вырăнне, директорăн «каçару ыйтма» тивнĕ.

Пушарниксемпе «Электросеть» работникĕсем кăна хăйсен ĕçне вăхăтра пырса туса панă, ыттисем вара васкаман. Парторганизацисен секретарĕсене — хула комитетне, хуçалăх руководителĕсене хула Совечĕн ĕçтăвкомне чĕнсе калаçни те усă парайман.

Музей çуртне «Чувашградострой» проектпа строительство пĕрлешĕвĕн 103-мĕш строительство управленийĕ çĕкленĕ, анчах та çумăр шывĕ юхса анмалли пăрăха йĕркеллĕ вырнаçтарса хăварман пирки çурт тăрринче шыв кÿлленсе тăма тытăннă. Çав шывах стенасене йĕпетсе çĕртнĕ, урайне юрăхсăра кăларнă. Чÿрече хупмалли решеткесене тĕрĕс туманнине пула «Стройтехника» завода заказ парса тата укçа тÿлесе çĕнĕрен тутарма тивнĕ. Юрать-ха Шупашкарти спецотделка ĕçĕсене тăвакан специализациленĕ управлени стенасене шуратнă, урайне юсаса панă.

Хула Совет ĕçтăвкомĕн Б. Мубинов ертсе пыракан пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн производство пĕрлешĕвĕ музее хăйĕн балансĕ çине илсе пулăшу парасшăн мар. Архивра кун пирки йышăннă документсем тупсан кăна ăна ÿкĕте кĕртме май килнĕ. «Чувашградострой» пĕрлешÿри «Зодчий» кооператив та музейри экспонатсене вырнаçтармалли галерейăна туса пĕтерессине тăсса янă. Ишĕлсе пыракан крыльцасене юсакан та çук халĕ.

Нумай экспонатсене, упрама условисем çук пирки, вăхăтлăха каялла таварса пана е Шупашкарти краеведени музейне леçнĕ (кунти музей — унăн филиалĕ). Асăннă ĕçсене туса пĕтермесĕр музей уçăлас çук. Музейăн çак вăрăма тăсăлакан савăнăçсăр историйĕ хăçан вĕçленессе татса калама йывăр. Тен, ку ыйту çине хула пуçлăхĕсем уçăмлăрах ответлĕç.

М. КУЗЬМИН.

# ҪУТҪАНТАЛӐК ТУСӖСЕМ ВАЛЛИ

Шупашкарти Хусанкай урамӗнче вырнаҫнӑ «Поиск» клубӗн ҫӗнелӗхне чи малтан, паллах, ачасем асархарӗҫ. Кунта ҫӗнӗ ҫул умӗн уҫӑлнӑ «Аквариум» салон вӗсемшӗн чи илӗртӳллӗ вырӑн пулса тӑчӗ. Аквариумсенчи илемлӗ пулӑсене курма ушкӑнӗ-ушкӑнӗпе килеҫҫӗ. Килте декоративлӑ пулӑсем тытас тата ӗрчетес текенсем те йышлӑ. Аквариума илемлетекен ӳсентӑран та, пулӑ апачӗ те туянма пулать.

— Магазин вуннӑран пуҫласа каҫхине улттӑччен ӗҫлемелле. Анчах ҫутҫанталӑк тусӗсене кӳрентерес мар тесе, каярах та хупатпӑр, — тет Анатолий Солухин продавец.

Хуҫалӑх расчечӗпе ӗҫлекен салона вӗсем иккӗн тытса тӑраҫҫӗ.

А. Солухин аквариум пуллисемпе пӗчӗклех интересленме пуҫланӑ, вӗсене ӗрчетнӗ. Хӑй тӗллӗн нумай вуланӑ, вӗреннӗ вӑл ку енӗпе. Шыври чӗрчун тӗнчи ҫинчен сехечӗ-сехечӗпе калаҫма хатӗр, пулӑсем ҫинчен темӗн те пӗлет. Александр Кириллов вара — ихтиолог, ятарласа пӗлӳ илнӗ. Салонри ӗҫе вӗсем наукӑри сӗнӳсене ҫӗнӗлӗхсене тӗпе хурса йӗркелесе ярасшӑн.

— Ҫак виҫҫӗр литр кӗрекен аквариумсене часах вырнаҫтарса пӗтеретпӗр, — паллаштарать хӑйсен хуҫалӑхӗпе А. Кириллов. — Кунта выставка залӗ пулать. Ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинчи тӗрлӗ вырӑнсенчи пулӑсен тӗслӗхӗсене ӗрчететпӗр. Хӑйне евӗр пӗлӳ залӗнче ҫак пулӑсем ҫинчен, вӗсем пурӑнакан тӑрӑхри климат ҫинчен каласа паракан литература та пулмалла. Паян пирӗн салона килекенсене вунпилӗк тӗрлӗ аквариум пулли сӗнме пултаратпӑр. Малашне ку хисеп чылай ӳсессе шанма пулать.

Аквариум пуллисене халиччен хулан ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ районӗнчи «Природа» магазинпа пасарта кӑна туянма пулатчӗ. Магазинра ассортимент чухӑн, пасарта хаксем «сыртаҫҫӗ». Салон ҫутҫанталӑк тусӗсен ыйтӑвӗсене туллинрех тивӗҫтерес пек туйӑнать. Тавар пасартинчен чылай йӳнӗ, государство хакӗпе пӗр майлах. Тупса илме питӗ йывӑр аквариумсене хатӗрлеме те тытӑнасшӑн салонра.

Тепӗр тӗллев — аквариум пуллисене ӗрчетекенсен обществине йӗркелесси. Ҫутҫанталӑк тусӗсем унта пухӑнма пуҫланӑ та ӗнтӗ.

А. ЛУКИЯНОВА.

### *Сигӗн ыйтӑва мӗнле тивӗҫтереҫҫӗ?*

# ВӐХӐТА ИРТТЕРМЕ, КАНМА КӐМӐЛЛӐ

Муркаш районӗнчи Мӑн Сӗнтӗрти райпо коллективӗ ял ҫыннисен ыйтӑвӗсене туллин тата вӑхӑтра тивӗҫтерме тӑрӑшать, ӗҫре ҫӗнӗ меслетсемпе анлӑн усӑ курать. Мӑн Сӗнтӗрти хуҫалӑх, культура таварӗсем сутакан магазинсенче, Сыпай, Юнкӑпус ялӗсенчи магазинсенче ӗҫ культури яланах пысӑк шайра. Кунти кооператорсем самообслуживани йӗркипе ӗҫлеҫҫӗ, кирлӗ таварсене ял ҫыннисен заявкисем тӑрӑх ятарласа кӳрсе килеҫҫӗ. Ҫавна май магазин коллективӗсем таварҫаврӑнӑш планӗсене уйӑхран уйӑха ӑнӑҫлӑ пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Иккӗмӗш квартал итогӗсем тӑрӑх мӑнсӗнтӗрсем Чӑваш АССР Министрсен Совечӗн тата облпрофсоветӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне тивӗҫ пулнӑ. Ҫулталӑка ӑнӑҫлӑ вӗҫленӗ.

Райпори обществӑлла апатлану системинче ӗҫлекенсем те ырӑ тӗслӗх кӑтартаҫҫӗ. Калайкассинчи шашлык пӗҫерекен кафере ӗҫлекенсенех илер, акӑ. Раиса Спиридоновна Тарасова повар ертсе пыракан туслӑ коллектив ҫынсене яланах таравӑт кӗтсе илет, тутлӑ апат-ҫимӗҫпе сӑйлать.

Кафе аслӑ ҫул хӗрринче, хуҫалӑхра усӑ куракан таварсем сутакан магазинпа юнашар вырнаҫнӑ. Ҫавна май, кунта яланах халӑх йышлӑ. Иртен-ҫӳрен, строительсем ытларах апатланаҫҫӗ. Кафере пушӑ вӑхӑта ирттерме, канма та кӑмӑллӑ.

Ю. ЮРЬЕВ.

# ТАВА ТИВӖҪЛӖ

Сӗмӗрлери 25-мӗш аптекӑра ӗҫлекенсем кунта килсе ҫӳрекенсене яланах ӑшӑ кӑмӑлпа кӗтсе илеҫҫӗ, кашнинех кирлӗ эмелпе тивӗҫтерме тӑрӑшаҫҫӗ.

Ку аптекӑра Тӑван ҫӗршывӑн аслӑ вӑрҫин ветеранӗсем, сусӑрланса юлнӑ ҫынсем час-часах пулаҫҫӗ. Вӗсен кӑмӑлне тупма пӗлеҫҫӗ аптека ӗҫченӗсем. Ҫакна сӗнӳсен кӗнекинче ҫырса хӑварнӑ тӗслӗхсемпе аван ҫирӗплетме пулать.

Г. ИВАНОВ.

## *Выставка залӗсенче*



Ватӑ Шупашкар (Унчченхи Троицки мӑнастир).

* * *



— Ахӑртнех, хамӑр завод кирпӗчех ӳкрӗ пулмалла.

* * *

— Ку вӑрра йытӑ та вӗрме пӑрахрӗ ӗнтӗ...

И. Владимиров ӳкерчӗкӗсем.

# ӲКЕРЧӖК ӐНСӐРТРАН ҪУРАЛМАСТЬ

**ШУПАШКАРТИ «СЕСПЕЛ» КИНОТЕАТРТА И. В. ВЛАДИМИРОВ ХУДОЖНИК ВЫСТАВКИ УҪАЛЧӖ. ГРАФИКА АСТИ ӐНА ХАЯ ХАҪАТРА ӖҪЛЕМЕ ПУҪЛАНАРАНПА 30 ҪУЛ ҪИТНИНЕ ХАЛАЛЛАНА.**

— Чи малтанах «Советская Чувашия» хаҫатра хамӑрӑн чаплӑ ентешӗмӗрпе, В. И. Чапаевпа ҫыхӑннӑ вырӑнсене сӑнлакан ӳкерчӗксем пичетленсе тухнӑччӗ, — аса илет Иван Владимирович. — Акӑ, тӗслӗхрен, Будайка ялӗ пулнӑ вырӑн.

Шупашкарти паллӑ ҫуртсем, истори тӗлӗшӗнчен хаклӑ вырӑнсем — ҫак тема И. Владимиров график пултарулӑхӗнче пысӑк вырӑн йышӑнать. Сӑмахран, унччен пӗтӗм халӑха илӗртсе тӑнӑ Атӑл хӗрри, халӗ Шупашкар ГЭСне пула ҫухалнӑскер, выставкӑри вуншар ӳкерчӗкре сӑнланнӑ. Ҫав вӑхӑтрах ГЭС кунҫулӗпе те самаях аван паллашма пултаратпӑр эпир экспозицире.

Пӑмраллӑ чӑваш ялӗ, ун ӗҫчен ҫыннисем — ҫак тема та ҫывӑх художника. Хӑй те ялта ӳсе ҫитӗннӗскер, И. Владимиров ун пурнӑҫне ӑшшӑн сӑнлать.

График ӗҫӗсем «Капкӑн» журналта та час-часах пичетленсе тухаҫҫӗ. Вӗсенче художник пирӗн пурнӑҫри ҫитменлӗхсене, киревсӗрлӗхсене ҫивӗччӗн питлет. Ӗҫкӗпе супӑшакансене, ҫӑткӑн та сӑпайсӑр ҫынсене, вӑрӑсене, ӗҫ вырӑнӗпе усӑ курса таса мар ӗҫпе вараланакан, пултарусӑр пуҫлӑхсене уйрӑмах кураймасть ун пери, намӑслантарать вӗсене, тӑрӑ шыв ҫине кӑларать, тӳрӗ ҫул суйласа илме чӗнет. Иван Владимировичпа «Коммунизм ялавӗ» хаҫат редакцийӗнче темиҫе ҫул пӗрле ӗҫленӗ май, ҫакна та палӑртса хӑварас килет. Художникӑн сатирӑлла ӳкерчӗкӗсем ӑнсӑртран мар ҫуралаҫҫӗ: тӗрӗсмарлӑха асӑрхасан, чӗнмесӗр чӑтаймасть вӑл, пӗтӗм чун-чӗрипе сивлет ӑна, тӳнтерле пулӑмсемпе вӑйӗ ҫитнӗ таран кӗрешет.

Выставкӑра пурӗ 200 яхӑн ӗҫ.

Л. АФАНАСЬЕВА.

### *Ҫӗнӗ кӗнеке*

# ПАТТӐРСЕНЕ ЧЫСЛАСА

Анат Атӑл кӗнеке издательствинче «Будни Волжской победы» кӗнеке пичетленсе тухнӑ. Унӑн авторӗ, филологи наукисен докторӗ В. Б. Смирнов Сталинград патӗнчи ҫапӑҫусене хутшӑннӑ, тата ун ҫинчен ҫырнӑ писательсемпе поэтсем — Михаил Шолоховпа Константин Симонов, Василий Гроссманпа Галина Николаева, Борис Полевойпа Василий Коротков тата ытти вуншар совет литераторӗ ҫинчен каласа панӑ, вӗсен произведенийӗсене тишкернӗ.

Кӗнекере Сталинград паттӑрлӑхӗ ҫинчен пирӗн ҫӗршыври тӗрлӗ халӑх литераторӗсем хавхаланса ҫырнине палӑртнӑ, ҫав шутра Петӗр Хусанкайӑн «Тӑрнасем» сӑввине асӑнса хӑварнӑ. 26-мӗш страницӑра ку сӑвӑри пӗр абзаца кӗртнӗ. Герой-хулана хӳтӗлесе пуҫ хунӑ минометчиксен взвочӗн командирӗн, чӑвашсен паллӑ поэчӗн Владимир Бараев-Сӗрккен хушаматне те тӗл пулатпӑр кунта.

«Курсантсен альманахӗнчи» юрӑ-такмаксене анлӑн илсе кӑтартнӑ.

П. ЮТКИН.

### Спорт — Спорт

# ГАВАЙ УТРАВӖСЕМ ҪИНЧЕ

Ҫӗнӗ Шупашкарти СССР спорт мастерӗ О. Егорова 1990 ҫула Америкӑра, тӗрӗсрех каласан, Гавай утравӗсем ҫинче кӗтсе илнӗ. Кунта вӑл тӑван ҫӗршыв командин чысне 30 километрлӑ эстафетӑллӑ ӑмӑртура хӳтӗленӗ.

Эпир вунсаккӑр ҫулхи Ольгӑпа ҫак кунсенче Ҫӗнӗ Шупашкарти манежра тӗл пултӑмӑр.

— Гавай утравӗсем — США-н хӑйне евӗрлӗ штачӗ. Унта ҫитес тесен, кунӗпе самолетпа вӗҫмелле, — тет «Химпром» производство пӗрлешӗвӗн спорт шкулӗнче ӑсталӑх пухнӑ О. Егорова. — Мускавран тӳрех Нью-Йорка вӗҫсе кайрӑмӑр, унтан — Америка континенчӗн тепӗр енне, XXIII Олимп вӑййисем пулса иртнӗ Лос-Анджелес хулине, малалла вара — Лӑпкӑ океан ҫийӗн Гавай ут-

фетӑра кашни команда чысне ултӑ спортсменка хӳтӗленӗ.

— Пӗрремӗш тапхӑрта пирӗн командӑшӑн Белоруссирен хӗрӗ Татьяна Голушко чупрӗ. Пилӗк километрлӑ дистанцире вӑл вунтӑххӑрмӗш вырӑн кӑна йышӑнчӗ. Паллах, ҫул ҫинче ывӑнни иртсе кайман. Ытти тапхӑрсенче те пирӗн хӗрсем мала тухаймарӗҫ. Воронеж облаҫӗнчи Алевтина Жилкина пиллӗкмӗш тапхӑра вунпӗрмӗш вӗҫлерӗ. Тренерсем юлашки тапхӑрта ӑмӑртма мана шаннӑччӗ. Командӑна маларах кӑларас тесе, пӗтӗм вӑя патӑм, анчах та хамран 600—800 метр маларах чупса пыракан Япони, ГДР, США спортсменкисене хӑвалаласа ҫитеймерӗм. Апла пулин те, улттӑмӗш тапхӑрта эпӗ чи лайӑх вӑхӑт кӑтартрӑм. Савӑнӑшӑн мана Япо-

# ПӖЛТЕРӲСЕМ

*Халӑхсен Туслӑхӗ орденлӗ*
*Чӑваш ҫамрӑкӗсен театрӗ*

**январӗн 14—15-мӗшӗсенче**

*«ТУЙ КАҪХИНЕ»*

*(«Ҫурҫӗр хыҫҫӑнхи апатлану»)*

**драмӑна пуҫласа кӑтартать.**

Пьеса авторӗ — Борис Чиндыков. Спектакль режиссерӗ — Вячеслав Оринов. Художникӗ — Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ художникӗ Николай Максимов. Композиторӗ — Николай Казаков.

Рольсенче: Валерий Иовлев, Сергей Павлов, Галина Пескова, Иван Путяков, Светлана Савельева, Валентина Сурикова артистсем, Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ артисчӗсем Лидия Красова, Валентина Музыкантова, Василий Павлов, Чӑваш АССР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗсем Елена Иовлевапа Елизавета Шайдукова.

Спектакльсем 19 сехетре пуҫланаҫҫӗ.

Тараватлӑн кӗтетпӗр сире, хисеплӗ юлташсем!

**«ЧЭАЗ» производство пӗрлешӗвӗпе**
**Шупашкарти 1-мӗш профтехучилище**

СССР Хӗҫпӑшаллӑ Вӑйӗсен ретӗнчен запаса тухнӑ яшсене ҫак специальноҫсене вӗренме илеҫҫӗ: **анлӑ профиллӗ станочник, технологи оборудованийӗн гидросистемисен юсавҫӑ-слесарӗ.**

Станочниксен группинче 6 уйӑх, юсавҫӑ-слесарьсен группинче 4 уйӑх вӗренмелле.

Вӗренекенсене уйӑхне 30 тенкӗ стипенди параҫҫӗ, производство пӗрлешӗвӗ стипенди сумне 60 тенкӗ хушса хулет. Производство практики вӑхӑтӗнче вӗренекенсем ӗҫ укҫин 50 процентне алла илеҫҫӗ. Училищӗре вӗреннӗ вӑхӑт ӗҫ стажне кӗрет.

**Занятисем январӗн 15-мӗшӗнче пуҫланаҫҫӗ.**

Заявленипе пӗрле ҫак документсем кирлӗ: медицина справки, 2 сӑнӳкерчӗк (3х4 см), вӑтам пӗлӳ илни ҫинчен панӑ документ.

Заявленисене ҫак адреспа йышӑнаҫҫӗ: **г. Чебоксары, пр. Ленина, 9, ПТУ № 1.**

22-15-93 телефонпа тӗплӗнрех ыйтса пӗлме пулать.

**Шупашкарти**
**троллейбус управленийӗ**

**троллейбус водителӗсен курсне вӗренме илет.**

Вӑтам пӗлӳ илнӗ 18 султан аслӑрах ҫамрӑксене йышӑнаҫҫӗ. Вӗренекенсене уйӑхне 85 тенкӗ стипенди параҫҫӗ. 6 уйӑх вӗренмелле. Курса вӗренме кӗрес текенсемпе январӗн 15-мӗшӗнче калаҫу ирттереҫҫӗ.

Тӗплӗнрех ҫак адреспа ыйтса пӗлмелле: **Шупашкар, Энгельс урамӗ, 27, троллейбус управленийӗн кадрсен пайӗ,** телефон 21-91-89.

**ШУПАШКАРТИ ПРОКАТ КОМБИНАЧӖН ПУЛӐШУСЕН БЮРОВӖ**

икӗ ҫӗрте ӗҫлесе траур чечекӗсем хатӗрлекенсене, виле ҫинче пытармалли хатӗрсем ҫӗлекенсене, килти ҫӗвӗ машинисене юсама тата йӗркере тытса тӑма вӗрентекен курссене преподавательсене чӗнет.

Ҫак адреспа ыйтса пӗлмелле: г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом 24, бюро услуг, телефон 22-28-95.

**«ЧУВАШАГРОПРОМСТРОЙ» ПӖРЛЕШӖВӖН «КАНАШСКАЯ» СТРОИТЕЛЬСТВО ОРГАНИЗАЦИЙӖ**

ҫӗнӗ «ГАЗ-САЗ-3507» автомобиле ҫӗнӗ «Кубань» е «КАВЗ» автобуспа улӑштарать.

Ҫак адреспа тӗплӗнрех ыйтса пӗлмелле: г. Канаш, ул. Кооперативная, 18.
Телефонсем: 3-25-80, 3-17-96. 3-17-92.

**ӖҪЕ ВЫРНАҪТАРАКАН ЦЕНТР**

*Театр*

# ЧӖРӖЛЕҪҪӖ ПУКАНЕСЕМ

ПУКАНЕ театрӗн

ратовсем самообслуживани йĕркипе ĕçлеççĕ. Кирлĕ таварсене ял сыннисен заявкисем тăрăх ятарласа кӳрсе килеççĕ. Çавна май магазин коллективĕсем таварçаврăнăш планĕсене уйăхран уйăха ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ.

Иккĕмĕш квартал итогĕсем тăрăх, мăнсĕнтĕрсем Чăваш АССР Министрсен Советĕн тата облпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне сăйлать.

Кафе аслă çул хĕрринче, хуçалăхра усă куракан таварсем сутакан магазинпа юнашар вырнаçнă. Çавна май, кунта яланах халăх йышлă. Иртен-çӳрен, строительсем ытларах апатланаççĕ. Кафере пушă вăхăта ирттерме, канма та кăмăллă.

Ю. ЮРЬЕВ.

## ТАВА ТИВĔÇЛĔ

Çĕмĕрлери 25-мĕш аптекăра ĕçлекенсем кунта килсе çӳрекенсене яланах ăшă кăмăлпа кĕтсе илеççĕ, кашнинех кирлĕ эмелпе тивĕçтерме тăрăшаççĕ.

Ку аптекăра Тăван çĕршывăн аслă вăрçин ветеранĕсем сусăрланса юлнă çынсем часах пулаççĕ. Вĕсен кăмăлне тупма пĕлеççĕ аптека ĕçченĕсем. Çакна сĕнӳсен кĕнекинче çырса хăварнă тĕслĕхсемпе аван çирĕплетме пулать.

Г. ИВАНОВ.

*Çĕнĕ кĕнеке*

## ПАТТĂРСЕНЕ ЧЫСЛАСА

Анат Атăл кĕнеке издательствинче «Будни Волжской победы» кĕнеке пичетленсе тухнă. Унăн авторĕ, филологи наукисен докторĕ В. Б. Смирнов Сталинград патĕнчи çапăçусене хутшăннă, тата ун çинчен çырнă писательсемпе поэтсем — Михаил Шолоховпа Константин Симонов, Василий Гроссманпа Галина Николаева, Борис Полевойпа Василий Коротков тата ытти вуншар совет литераторĕ çинчен каласа панă, вĕсен произведенийĕсене тишкернĕ.

Кĕнекере Сталинград паттăрлăхĕ çинчен пирĕн çĕршыври тĕрлĕ халăх литераторĕсем хавхаланса çырнине палăртнă, çав шутра Петĕр Хусанкайăн «Тăрнасем» сăввине асăнса хăварнă. 26-мĕш страницăра ку сăвăри пĕр абзаца кĕртнĕ. Герой-хулана хӳтĕлесе пуç хунă минометчиксен взвочĕн командирĕн, чăвашсен паллă поэчĕн Владимир Бараев-Сĕрккен хушаматне те тĕл пулатпăр кунта.

«Курсантсен альманахĕнчи» юрă-такмаксене анлăн илсе кăтартнă.

П. ЮТКИН.

*Спорт* — *Спорт*

## ГАВАЙ УТРАВĔСЕМ ÇИНЧЕ

Çĕнĕ Шупашкарти СССР спорт мастерĕ О. Егорова 1990 çула Америкăра, тĕрĕсрех каласан, Гавай утравĕсем çинче кĕтсе илнĕ. Кунта вăл тăван çĕршыв командин чысне 30 километрлă эстафетăллă ăмăртура хӳтĕленĕ.

Эпир вунсакăр çулхи Ольгăпа çак кунсенче Çĕнĕ Шупашкарти манежра тĕл пултăмăр.

— Гавай утравĕсем — США-н хăйне евĕрлĕ штачĕ. Унта çитес тесен, кунĕпе самолетпа вĕçмелле, — тет «Химпром» производство пĕрлешĕвĕн спорт шкулĕнче ăсталăх пухнă О. Егорова. — Мускавран тӳрех Нью-Йорка вĕçсе кайрăмăр, унтан — Америка континенчĕн тепĕр енне, XXIII Олимп вăййисем пулса иртнĕ Лос-Анджелес хулине, малалла вара — Лăпкă океан çийĕн Гавай утравĕсем çине. Гонолулу хулине пире питĕ ăшшăн кĕтсе илчĕç. Унта пуринчен те ытларах японецсем пурăнаççĕ иккен...

Совет спортсменĕсем Америкăн чи аякри штатне ытти çĕршыв атлечĕсенчен кăшт каярах юлса çитнĕ. Вĕсем самолет çинчен аннă вăхăтра Австри, Англи, США, Канада, Бразили, ГДР, Португали, Итали, Япони, Бельги, Колумби атлечĕсем черетлĕ тренировкăран таврăнма та ĕлкĕрнĕ. Тепĕр кунхинех — старт.

30 километрлă дистанцие ултă тапхăр çине пайланă пулнă. Çапла майпа çăлтăрлă эстафетăра кашни команда чысне ултă спортсменка хӳтĕленĕ.

— Пĕрремĕш тапхăрта пирĕн командăшăн Белоруссин хĕрĕ Татьяна Голушко чупрĕ. Пилĕк километрлă дистанцире вăл вунтăххăрмĕш вырăн кăна йышăнчĕ. Паллах, çул çинче ывăнни иртсе кайман. Ытти тапхăрсенче те пирĕн хĕрсем мала тухаймарĕç. Воронеж облаçĕнчи Алевтина Жилкина пиллĕкмĕш тапхăра вунпĕрмĕш вĕçлерĕ. Тренерсем юлашки тапхăрта ăмăртма мана шаннăччĕ. Командăна маларах кăларас тесе, пĕтĕм вăя патăм, анчах та хамран 600—800 метр маларах чупса пыракан Япони, ГДР, США спортсменкисене хăваласа çитеймерĕм. Апла пулин те, улттăмĕш тапхăрта эпĕ чи лайăх вăхăт кăтартрăм. Çавăншăн мана Японире кăларнă электронлă сехет парнелерĕç, — аса илет Ольга.

Хамăртан хушса çакна калар: О. Егорова — Гавай утравĕсем çинче пулса курнă пĕртен-пĕр чăваш хĕрĕ. Вăл, пĕлтĕр çĕршыври çамрăксен чемпионатĕнче пуçласа çĕнтернĕскер, халĕ кросс енĕпе Францире пулакан тĕнче чемпионатне хутшăнма хатĕрленет. Спортра пысăк çитĕнӳсем тума ăна Чăваш педагогика институчĕн физвоспитани факультетне пĕтернĕ СССР спорт мастерĕ Николай Иванович Анисимов пулăшать.

В. СМИРНОВ.

троллейбус управленийĕ

троллейбус водителĕсен курсне вĕренме илет.

Вăтам пĕлӳ илнĕ 18 султан аслăрах çамрăксене йышăнаççĕ. Вĕренекенсене уйăхне 85 тенкĕ стипенди параççĕ. 6 уйăх вĕренмелле. Курса вĕренме кĕрес текенсемпе январĕн 15-мĕшĕнче калаçу ирттереççĕ.

Тĕплĕнрех çак адреспа ыйтса пĕлмелле: **Шупашкар, Энгельс урамĕ, 27, троллейбус управленийĕн кадрсен пайĕ, телефон 21-91-89.**

### ШУПАШКАРТИ ПРОКАТ КОМБИНАЧĔН ПУЛАШУСЕН БЮРОВĔ

икĕ çĕрте ĕçлесе траур чечекĕсем хатĕрлекенсене, вилĕ çынна пытармалли хатĕрсем сĕлекенсене, килти çĕвĕ машинисене юсама тата йĕркере тытса тăма вĕрентекен курссене преподавательсене чĕнет.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: **г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом 24, бюро услуг, телефон 22-28-95.**

### «ЧУВАШАГРОПРОМСТРОЙ» ПĔРЛЕШĔВĔН «КАНАШСКАЯ» СТРОИТЕЛЬСТВО ОРГАНИЗАЦИЙĔ

çĕнĕ «ГАЗ-САЗ-3507» автомобиле çĕнĕ «Кубань» е «КАВЗ» автобуспа улăштарать.

Çак адреспа тĕплĕнрех ыйтса пĕлмелле: **г. Канаш, ул. Кооперативная, 18.**

Телефонсем: 3-17-92, 3-25-80, 3-17-96.

*Театр*

# ЧĔРĔЛЕÇÇĔ ПУКАНЕСЕМ

ПУКАНЕ театрĕн искусствинче мĕн тĕп вырăн йышăнни пирки тĕрлĕ майлă шутласа-виçсе пăхсан çак пĕтĕмлетӳ патне пырса тухатăн: тĕп вырăнта — пукане чун кĕртесси. Пукане театрĕн искусствин тĕп шухăшĕ те — çакă. Паллах, çак театр майĕсемпе театр искусствин ытти енĕсенче те (сăмахран, драмăпа, балетра) усă кураççĕ. Анчах пукане вылятаракансем çеç асамлă ĕç тума пултараççĕ: чĕрĕ мар пукане чун кĕртсе персонаж туса хураççĕ. Тен, çавăнпах пулĕ, ĕлĕк пукане ĕçленĕ çынсене чиркӳ карти çывăхне пытарма ирĕк паман. Чунсăр япалана чун кĕртес енĕпе вĕсем турăпа ăмăртнă имĕш.

Пукане вылятаракансен асамлă вăйне ачасем уйрăмах ĕненеççĕ. Кăçалхи сезонра Чăваш Пукане театрĕ вĕсем валли çĕнĕ икĕ спектакль лартрĕ: В. Масловăн «Сказка странствующего факира» тата Юхма Мишшин «Итлемен чăх чĕппи». Çак пьесăсен сюжечĕсемпе геройĕсен, вăхăчĕ тĕрлĕрен пулин те, спектакльсене пĕрпеклĕх пур. Çав пĕрпеклĕх малтанах театр тĕллевĕсенче — çамрăк куракансене, пукане театрĕн искусствин анлăлăхне кăтартса пама тăрăшнинче палăрать.

«Итлемен чăх чĕппи» (режиссерĕ — В. Иванов, художникĕ — В. Карпов) — хăйне евĕрлĕ ретро-спектакль. Хăй вăхăтĕнче перчеткеллĕ тата петрушка-пуканесем сцена çине час-часах тухнă. Халĕ ĕнтĕ петрушниксен ăсталăхĕ манăçа тухнăпа пĕрех. Сасă кăлармалли ятарлă инструментпа («пишикпа») усă курма пĕлекен те сахал.

Çавăнпа та паянхи сцена çинче çакăн йышши пукане вылянине курма уйрăмах интереслĕ. Петрушка-пуканене актер алă çине тăхăнать, çавăнпа пукане епле утасси, унăн сасси йăлтах актер ăсталăхĕнчен килет. А. Тимофеева лапма-тăма пĕлмен, йăпă, чарусăр, харсăр Шип пĕпĕ рольне ăста кăларать (Паллах, çак Шип сăнарĕ урлă пĕр-пĕр ача сăнарĕ тухса тăрать). Шип юррисене, вĕсем куракансене савăнăçпа хаваслăх кӳреççĕ пулин те, çав терн ăнăçлă пулса тухнă теме çук.

А. Степанова вылякан Амăшĕ-чăх ролĕ çинчен темĕн чухлĕх калама пулать. Е çав терн лăпкă Амăшĕ. Тепĕр чух ниçта кайса кĕреймн хыпкаланчăк. Е питĕ пăлханчăк. Спектакльти Вăкăр вара ĕне пек пулса тухнă. Савăнпах пулĕ П. Ильин актера пуканене алла илме йывăр. Пукане театрĕнче актер ĕçĕ художникран та нумай килет, тесе каласшăн эпĕ. Вăкăрăн хаярлăхĕпе усаллăхне кăтартас тесе, актер тем пек тăрăшрĕ пулин те, ачасем пурпĕрех çак сăнарта мăшăлти-мĕшĕлти, ӳркенчĕк ĕнене кураççĕ. Паллах, Анчăка та (Г. Кириллов), Тилле те (Е. Хорькова), Качакана та (П. Зубайкин) уйăрса илме пулать, анчах ку пуканесем пит курăмлах мар, çавăнпа çак сăнарсем тăрăх хамăр пĕлекен çынсен характерĕсене палласа илме йывăр. Чĕпсемпе Тилĕ çинчен каласа пама тĕллев тытман-çке пукане театрĕн актерĕсем, вăлтса та юптарса çынсем çинчен — пирĕн çинчен каласа параççĕ вĕсем. Юптарусемпе юмахсене те çав тĕллевпех хывнă. Ахальтен мар ĕнтĕ пукане театрĕн чи юратнă жанрĕ — юмах.

ПУКАНЕНЕ чун кĕртесси — пултарулăх ĕçĕнчи чи пысăк савăнăç. Анчах çăмăллăн килмест вăл. Пуканене вырăнтан вырăна куçарса лартнипе е сиккелесе илнипе нимĕн те пулмасть-çке, кĕвĕ пек çыхăнулă, илемлĕ тата çав вăхăтрах пĕлтерĕшлĕ хусканусем тумалла. Савăн чухне тин сăнарсем пĕр-пĕринчен уйрăлса тăма, хăйсен рольне уçса пама пултараççĕ.

В. Масловăн «Сказка странствующего факира» спектаклĕнче çын маска тата пукане хушшинчи логика çыхăнăвне тĕрĕс палăртнă. Аист — Калиф çинчен калакан юмах философиллĕ юмахсен шутне кĕрет. Этем ĕçĕн тата пурнăçĕн пĕлтерĕшĕ çинчен шухăшлани тĕп вырăна тухать. Спектакльте çакна шута илнĕ. Илемлĕ сценăсем сахал мар ку спектакльте. Пуринчен те ытларах тыткăнлаканни — пуканесем. Пуканесен системи кунта питĕ кăткăс: алтуйипе вылятаракан пуканесем, партер пуканесем, манекен-пукане... Вĕсен вăрттăнлăхĕсене куракансем чылай чух тавçăрса та илеймеççĕ. Çак спектакльте пукане системисемпе пĕлсе тата вырăнлă усă курнă.

Виççĕмĕш хут паллаштарăм Чăваш Пукане театрĕн спектаклĕсемпе. Малтанхипе танлаштарсан, театр ирĕклĕнрех сывласа яни сисĕнет, спектакльсене критиксем курасран та шикленмест. Мĕншĕн тесен пуканесемпе тимлĕрех, тăрăшарах ĕçлеме пуçланă. Çакă «Итлемен чăх чĕппипе» «Сказка странствующего факира» спектакльсенченех аван курăнчĕ.

Çапах та савăнма иртерех-ха. Малтанхи ăнăçупа лăпланмасăр малалла та çапла çирĕппĕн утăр коллектив.

К. МУХИН,
театр критикĕ.

Мускав.

## Тĕрлĕ ăмăртусенче

**ЙЫВĂР АТЛЕТИКА.** Сĕнтĕрвăрринчи «Атлант» атлетика клубĕнче республикăри çамрăксен турнирĕ пулса иртнĕ. Малти вырăна Елчĕк районĕн, Çĕнĕ Шупашкарпа Çĕмĕрле хулисен командисем йышăннă.

**КИРЕ ПУКАНЕ ЙĂТАССИ.** Арзамасра Совет Союзĕн Геройне В. Новикова асăнса йăлана кĕнĕ турнир ирттернĕ. Пирĕн республика чысне унта Çĕмĕрлери атлетсем хӳтĕленĕ. Автофургон комбинатĕнче ĕçлекен А. Мегучев (65 кг) çитĕннĕ спортсменсем хушшинче, 6-мĕш профтехучилищĕре вĕренекен О. Шандыбин (80 кг) яшсен ушкăнĕнче пуринчен те нумайрах очко пухнă, турнир çĕнтерӳçисем пулса тăнă.

**ЙĔЛТĔР СПОРЧĔ.** Çĕнĕ Шупашкарти Тĕнерç ращинче профтехучилищĕсенче тата вăтам шкулсенче вĕренекенсен I спартакиадин ăмăртăвĕсем пулса иртнĕ. Чăваш АССР халăха вĕрентес ĕç министерствин тата Пĕтĕм Союзри «Трудовые резервы» обществăн область совечĕн парнисене Канаш районĕнчи Сухайкасинчи, Канаш хулинчи 5-мĕш тата Шупашкарти 39-мĕш вăтам шкулсенчи йĕлтĕрçĕсем çĕнсе илнĕ. Эстафетăсенче канашсем вăйлăрах пулнă.

Редактор А. П. КАЗАНОВ.

## ĔÇЕ ВЫРНАÇТАРАКАН ЦЕНТР

ШУПАШКАР ХУЛИ, ЭНГЕЛЬС УРАМĔ, 16
ÇĔНĔ ШУПАШКАР ХУЛИ, ЭНЕРГЕТИКСЕН УРАМĔ, 12

ĔÇЕ ИЛЕТ:

**«Монолитстрой» проектпа строительство пĕрлешĕвне** — пĕрлешĕвĕн главнăй механикне, мастер-механиксене; строительство управленийĕсен главнăй инженерĕсене, начальникне; геодезиста, пурăнмалли монолит çуртсем тунă çĕре прорабсене тата мастерсене, вăл шутран Чăваш республикинчи Йĕпрес поселокне мастер-прораба; электрика, слесарь-сантехника, штукатур-малярсене, плотниксене; пĕрлешĕвĕн проект управленийĕнче ĕçлеме конструкторсен группин руководительне; генплан, водопровод, канализаци, газпа тивĕçтерес енĕпе ертсе пыракан специалистсене; промышленность строительствин объекчĕсене проектлакан специалиста, архитектора, конструктора.

Çемьесĕррисене общежитие пурăнма вырнаçтараççĕ, 4—5 çул хушшинче хваттер параççĕ. Администраципе калаçса татăлса, специалистсене çăмăллатнă условисемпе хваттер пама пултараççĕ.

23-86-30, 23-86-36 телефонсемпе тĕплĕнрех ыйтса пĕлме пулать.

◆

**Шупашкарти пассажирсем илсе çӳрекен автотранспортăн производство пĕрлешĕвне** — хулари маршрутсем çинче ĕçлеме автобус водителĕсене, газосварщиксене, жестянщиксене, автомобиль юсакан слесарьсене, производство пӳлĕмĕсен уборщицисене, двигательсене юсакан слесарьсене, автобуссен кондукторĕсене, ЭВМ операторĕсене, ЭВМ электромеханикне, II категориллĕ инженер-электроника, II категориллĕ инженер-программиста.

## ТЕЛЕВИДЕНИ

КЕÇНЕРНИКУН, ЯНВАРЕН 11-МЕШЕ

ПЕРРЕМЕШ ПРОГРАММА

6.30 — 120 минут.
8.35 — «Житие Дон Кихота и Санчо». Нумай сериллĕ илемлĕ телефильм. Иккĕмĕш фильм. 4 сери.
9.40 — «Зима в Простоквашино». Мультфильм.
9.55 — «Ромео и Джульетта». Фильм-балет.
11.25 — Ача - пăча сехечĕ (акăлчанла).
12.25 — Коллаж.
12.30 — Вăхăт.
15.30 — Концерт.
15.55 — Документлă фильмсем.
16.55 — Концерт.
17.30 — «Коммунист» журнал редакцийĕнче ирттернĕ «Çавра сĕтел».
18.30 — Вăхăт.
19.00 — 16 çул тултарманнисем тата унран аслăраххисем.
19.45 — Мультфильм.
19.55 — «Житие Дон Кихота и Санчо». Нумай сериллĕ илемлĕ телефильм. Иккĕмĕш фильм. 4 сери.
21.00 — Вăхăт.
21.30 — «Лицом к стране». Государство ыйтăвĕсене татса парас ĕçре уйрăм çын мĕнле вырăн йышăнни.
22.30 — Итали музыкин касĕ.
23.20 — Ситĕннисем валли мультфильмсем.
23.45 — ТСН.

ИККЕМЕШ ПРОГРАММА

8.00 — Ирхи гимнастика.
8.15 — Наукăллă - популярлă фильм.
8.35 — 11.05 — Вĕренӳ передачисем.
11.05 — Пирĕн сад.
11.35 — Вĕренӳ передачи.
12.05 — «Иван Грозный». Илемлĕ фильм. 1 сери.
13.50 — Ритмикăллă гимнастика.
14.20 — «Марк Твен против...» Илемлĕ телефильм.
17.00 — РСФСРти хуласен телестудийĕсем кăтартаççĕ. «Золотая Колыма». Сталин лагерĕсене хупнă Магаданăн малтанхи строителĕсем çинчен.
17.40 — Ритмикăллă гимнастика.
18.10 — «Жили-были». Пĕчĕк пурăнакан ватăсем çинчен.
18.30 — Вăхăт.
19.00 — Кĕрешӳçĕсен Пĕтĕм тĕнчери фестивалĕ. Мускавран.
20.00 — Ырă каç пултăр, ачасем!
20.15 — Уголовнăй розыск пĕлтерет (Шуп.).
20.30 — Информаципе публицистика кăларăмĕ (Шуп.).
21.30 — «Иван Грозный». Илемлĕ фильм, 2 сери.
22.55 — Концерт.

## РАДИО

КĔÇНЕРНИКУН, ЯНВАРЕН 11-МЕШЕ

6.15 — «Столица курьерĕ». Шупашкар çыннисем валли. 6.30 — «Позици». Информаципе публицистика программи. «Суйлавран суйлавччен». Шупашкар районĕ. 7.00 — 7.15 — Мускав передачисем. 7.15 — Республика хаçачĕсене пăхса тухни. 7.25 — 7.30 — Пĕлтерӳсем. 17.30 — 17.40 — Ноктюрнсем (стерео). 18.00 — Çĕнĕ хыпарсем. 18.12 — «Вăрманта мĕн пулса иртнĕ?» Çамрăксен театрĕн спектаклĕ çинчен. 18.25 — Республика хыпарĕсем. 18.35 — 19.00 — Конкурс пырать. Пирĕн кил — Совет Союзĕ.

## ТЕАТР

**К. В. ИВАНОВ ЯЧĔПЕ ХИСЕПЛЕНЕКЕН ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ДРАМА ТЕАТРĔ** — январĕн 11-мĕшĕнче «Ял кулли» комеди, январĕн 12-мĕшĕнче «Вунсаккăрта чух...» драма, январĕн 13-мĕшĕнче «Пушар лаши» трагикомеди.

**РЕСПУБЛИКĂРИ ВЫРĂС ДРАМА ТЕАТРĔ** — январĕн 16-мĕшĕнче «Жизнь и необычайные приключения солдата Ивана Чонкина» драма.

**ЧĂВАШ ÇАМРĂКСЕН ТЕАТРĔ** — январĕн 11-мĕшĕнче «Пăнтăр-пăнтăр балалайка» ял ӳкерчĕкĕсем, январĕн 12-мĕшĕнче «Аслă ывăл» комеди премьери, январĕн 14, 15-мĕшĕсенче «Сурсĕр хыççăнхи апатлану» драма премьери.

**ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО МУЗЫКА ТЕАТРĔ** — январĕн 11-мĕшĕнче «Летучая мышь» оперетта, январĕн 12-мĕшĕнче «Лебединое озеро» балет, январĕн 13-мĕшĕнче «Приключения Колобка» юмах, каçхине «Похищение из сераля» опера.

Каçхи спектакльсем 19 сехетре пуçланаççĕ.

## КИНО

**«СЕСПЕЛЬ»** — Кăвак зал: «Однажды в Америке» — 9.00, 19.00; «В крайнем случае я тебе ничего не скажу» — 13.00, 15.00, 17.00. Кĕрен зал: «Полет навигатора» — 9.00, 12.40, 16.20, 18.20; сборник мультфильмов — 14.30; «Деревенька моя центральная» — 10.50, 21.00. Кинозал: «Раз, два — горе не беда!» — 15.45; «Приговоренный» — 18.00, 20.00.

**«ОКТЯБРЬ»** — «Враг мой» — 8.50; «Однажды в Америке» — 10.30, 14.30, 18.30.

**«ПОБЕДА»** — Пысăк зал: «Жинина династия» — 9.00, 11.00, 13.00, 15.00, 17.00, 19.00, 21.00. Вăтам зал: «Рекс-волшебник» — 10.00, 14.00; «Кулаки в тьме» — 12.00, 16.00, 18.00, 20.30. Пĕчĕк зал: «Интердевочка» — 9.00, 11.45, 14.30, 17.15, 20.00.

**«МИР»** — «Ну, погоди!» — 9.00, 10.30, 12.00; «Солдат Иван Бровкин» — 14.00; «Полет навигатора» — 16.00, 18.30, 20.30.

**«СОКОЛ»** — «Попутного ветра, «Синяя птица» — 9.30; «Полет навигатора» — 11.00, 13.00; «Сюрприз Афродиты» — 15.00, 17.00, 19.15.

**«ЛУЧ»** — «Возвращение к свободе» — 13.00; «Я в полном порядке» — 16.00, 18.00, 20.00.

**«ЮНОСТЬ»** — «Крокодил Данди-2» — 15.00, 17.30, 20.00.

**ЧЭАЗ КУЛЬТУРА ЧЕРМЕНЕ** — «Это было у моря» — 14.00; «Убегающий август» — 18.00.

**«СТРОИТЕЛЬ» КЛУБ** — «Вилла «Орхидея» — 16.00, 18.00, 20.00.

ПИРĔН АДРЕС:
428019, г. ЧЕБОКСАРЫ,
пр. ИВАНА ЯКОВЛЕВА, 13.
ДОМ ПЕЧАТИ, III ЭТАЖ.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор — 21-00-67; редактор заместителĕсем — 21-04-17 тата 21-20-07; ответлă секретарь — 21-04-26; секретар нат — 25-03-01; парти пурнăç пайĕ — 21-08-61 тата 25-13-24; идеологи пайĕ — 21-03-54 тата 25-13-18; промышленность, строительство тата транспорт пайĕ — 21-33-64, 25-13-04 тата 25-13-81; агропромышленность пайĕ — 21-08-62, 25-13-10, 25-13-05 тата 25-13-58; советсен ĕçĕпе социаллă пурнăç пайĕ — 21-03-04 тата 25-13-06; культура пайĕ — 21-08-56 тата 25-13-02; çырусемпе обществăлла корреспондентсен пайĕ — 21-05-21, 25-13-07 тата 29-76-22; информаципе спорт пайĕ — 21-22-31 тата 25-13-09; фотокорреспондент — 21-45-94; хамăр корреспондентсем — 3-24-91 (Канаш), 2-10-54 (Елчĕк), 4-34 (Етĕрне) тата 2-26-30 (Сĕнтĕрвăрри); издательство директорĕ — 21-00-23; пĕлтерӳсен пайĕ — 21-14-89 тата 29-76-89; «Вестник недели» редакцийĕ — 21-04-39; бухгалтери — 21-45-86; Чăваш АССР Журналистсен союзĕн правленийĕ — 25-13-83; хаçатăн обществăлла приемнăйĕ — 21-22-94.

Хаçат тунтикунсăр пуçне куллен тухать.

НТ 34023. Индекс газеты — 54800. Типография издательства Чувашского обкома КПСС, г. Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13. Высокая печать, объем 2 печ. листа. Тираж 72.000 экз. Заказ № 133.